А. С. ОТАЧКИН

# ЧӐВАШ ЧӖЛХИН ГРАММАТИКИ

## III-мӗш ПАЙӖ

ПУҪЛАМӖШ ШКУЛСЕН ВИҪҪӖМӖШ КЛАСӖ ВАЛЛИ

ОБРАЗЦОВЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР

ЧӐВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1939

А. С. ОТАЧКИН

# ЧӐВАШ ЧӖЛХИН ГРАММАТИКИ

III-мӗш ПАЙӖ

ПУҪЛАМӖШ ШКУЛСЕН ВИҪҪӖМӖШ КЛАСӖ ВАЛЛИ

*Чӑваш АССР Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариачӗ ҫирӗплетнӗ*

Чӑваш АССР Государство Издательстви
Шупашкар ◆ 1939

## § 1. Ансăр предложенипе анлă предложени.

*1-мĕш задача.* Статьяна вуласа тухăр. Статьяра ансăр предложени миçе? Анлă предложени миçе?



### Панулми татса пуçтарни.

Кĕр çитрĕ. Хирте ĕçсем пĕтрĕç. Пахчари çимĕçсем пулса çитрĕç. Панулми пиçрĕ. Панулмие татса пуçтарма вăхăт çитрĕ. Ăнса пулнă панулмие пахчаçăсем татса пуçтараççĕ. Хĕлле çимелли улмана вĕсем ещĕксем çине тултарса хураççĕ. Çемçелнĕ улмасене пахчаçăсем кĕркунне çиме уйрăм хураççĕ.

*2-мĕш задача.* Çак предложенисене вуласа тухăр. Унтан кашни предложенири сăмахсене ыйтусем тăрăх мăшăрăн-мăшăрăн çыхăнтарса çырăр.

1. Хĕрлĕ шурăмпуç пĕлĕте витрĕ. 2. Кĕтӳç кĕтĕвеваскать. 3. Халăх хире тухрĕ. 4. Ачасем ыйхăран вăранчĕç. 5. Хирте машинăсем хыттăн кĕрлеççĕ. 6. Колхозниксем хирте савăнса ĕçлеççĕ.

1. (*Мĕн*?)... витрĕ. (*Мĕнле?*)... шурăмпуç. (*Мĕне*?)... витрĕ.

2. (*Кам?*)... васкать. (*Ăçта*?)... васкать.

3. (*Кам?*)... тухрĕ. (*Ăçта*?)... тухрĕ.

4. (*Камсем*?)... вăранчĕç. (*Мĕнтен*?)... вăранчĕç.

5. (*Мĕнсем*?)... кĕрлеççĕ. (*Ăçта*?)... кĕрлеççĕ. (*Мĕнле*?)... кĕрлеççĕ.

6. (*Камсем*?)... ĕçлеççĕ. (*Ăçта*?)... ĕçлеççĕ. (*Мĕнле*?)... ĕçлеççĕ.

Тĕслĕх: *Шурăмпуç витрĕ. Хĕрлĕ шурăмпуç. Пĕлĕте витрĕ.*

***3-мĕш задача.*** 2-мĕш задачăри пекех тăвăр.

## Улăхра.

1. Колхозниксем улăха тухрĕç. 2. Вĕсем унта утă çулаççĕ. 3. Пĕтĕм улăх янăраса тăрать. 4. Çулакансем юрă юрлаççĕ. 5. Улăхра çава сасси илтĕнет. 6. Уяр çанталăк тăрать. 7. Пурте хĕпĕртесе, ăмăртса ĕçлеççĕ.

1. (*Камсем*?)... тухрĕç. (*Ăçта?*)... тухрĕç.

2. (*Камсем?*)... çулаççĕ. (*Мĕн*?)... çулаççĕ. (*Ăçта?*)... çулаççĕ.

3. (*Мĕн*?)... янăраса тăрать. (*Мĕнле*?)... улăх.

4. (*Камсем*?)... юрлаççĕ. (*Мĕн*?)... юрлаççĕ.

5. (*Мĕн*?)... илтĕнет. (*Ăçта*?)... илтĕнет.

6. (*Мĕн?*)... тăрать. (*Мĕнле?*)... çанталăк.

7. (*Камсем?*)... ĕçлеççĕ. (*Мĕнле?*)... ĕçлеççĕ.

Тĕслĕх: *Колхозниксем тухрĕç. Улăха тухрĕç.*

Предложенири сăмахсем пĕр-пĕринпе пĕлтерĕшĕ тăрăх мăшăрăн-мăшăрăн çыхăнса тăраççĕ. Кашни мăшăрĕ тепĕр мăшăрпа çыхăнса тăрать. Пĕр мăшăрăн пĕр сăмахĕ тепĕр мăшăрăн сăмахĕпе çыхăнса çĕнĕ мăшăр пулать. Çапла майпа çыхăнса, сăмахсен ушкăнĕ уйрăм вĕçленнĕ шухăша пĕлтерет, предложени пулса тăрать.

***4-мĕш задача.*** Çак предложенисенчи сăмахсене мăшăрăн-мăшăрăн çыхăнтарса çырăр.

1. Тăрă пĕлĕтре тăри юрлать. 2. Мăн Çавал авкаланса юхать. 3. Ешĕл улăх сарăлса выртать. 4. Вĕтлĕх вăрман ешĕрсе ларать. 5. Пĕчĕк ачасем вăйă выляççĕ.

Тĕслĕх: *Тăри юрлать. Пĕлĕтре юрлать. Тăрă пĕлĕтре.*

***5-мĕш задача.*** Çак предложенисенчи сăмахсем пĕр-пĕринпе епле çыхăнса тăнине чертежпа тата ыйтусемпе кăтартса парăр.

Сарă хĕвел йăлтăртатса тухрĕ. Ирхи сывлăм кĕмĕл пек йăлтăртататать. Лăпкă çил вĕрет. Çутă шыв тӳлеккĕн юхать. Шывра шурă хурсем ишеççĕ. Улăхра пăрусем çӳреççĕ. Хирте сарă тулă хумханса ларать.

Тĕслĕх:




***6-мĕш задача.*** Аялта кăтартнă сăмахсенчен предложенисем тăвăр. Сăмах вĕçĕсене предложенире кирлĕ пек улăштарăр. Паллă тунă сăмахсене ан улăштарăр.

1. **Çанталăк,** ăшă, тăр.
2. Хир, **тырăсене,** пуçтар, **кĕнĕ.**
3. **Колхозниксем,** машина, авăн çап.
4. **Ачасем,** шкул, çӳре.





***7-мӗш задача.*** 5-мӗш страницӑри картинкӑсем тӑрӑх „Ҫумӑр айне пулни“ ятлӑ пӗчӗк калав ҫырӑр. Калавра миҫе предложени пулчӗ? Кашни предложенире мӗн ҫинчен каланӑ?

***8-мӗш задача.*** Аялта кӑтартнӑ темӑсенчен пӗрне суйласа илӗр те ун тӑрӑх пӗчӗк калав ҫырӑр.

1. Эпӗ вӑрмана кайни.
2. Эпӗ хула курни.
3. Эпӗ поезд курни.
4. Эпӗ пуҫласа кино курни.

***9-мӗш задача.*** Предложенисене вуласа тухӑр. Паллӑ тунӑ сӑмахсем мӗне пӗлтереҫҫӗ, мӗнле ыйтупа ыйтӑнаҫҫӗ?

1. Анлӑ **Атӑл** лӑпкӑн **юхать.**
2. Кӑтра **вӑрман** кашласа **ларать.**
3. Шурӑ **пароход** васкаса **ишет.**
4. **Пулӑҫӑ** вӑлтапа **ларать.**

***10-мӗш задача.*** Ҫак сӑвӑран паллӑ тунӑ япалана пӗлтерекен сӑмахсене тата вӗсемпе ҫыхӑнса тӑракан япала мӗн тунине пӗлтерекен сӑмахсене ҫырса илсе, ансӑр предложенисем тӑвӑр.

Тӗслӗх: *Хӗвел йӑлтӑртатать.*

| | |
|---|---|
| Сар **хӗвел** йӑлтӑртатать. | **Вӑрман** кашласа ларать. |
| Пӗтӗм **тӗнче** савӑнать. | Чӑпар **куккук** авӑтать. |
| **Эпир** хире тухатпӑр. | Шывра **хурсем** ишеҫҫӗ. |
| **Эпир** юрӑ юрлатпӑр. | Хирте **ҫынсем** ӗҫлеҫҫӗ. |

Ут ҫулаҫҫӗ сар **хӗрсем.**
Ут ҫулаҫҫӗ **каччӑсем.**
Ут тиеҫҫӗ **арҫынсем.**
Турттараҫҫӗ **лашасем.**

Предложенире кам е мӗн ҫинчен каланине пӗлтерекен сӑмаха **подлежащее** теҫҫӗ. Предложенире подлежащи мӗн тунине е унпа мӗн пулнине пӗлтерекен сӑмаха **сказуемое** теҫҫӗ.

Подлежащие **кам?** е **мӗн?** ыйтусем тӑрӑх пӗлеҫҫӗ.

Подлежащипе сказуемое предложенин аслӑ членӗсем пулса тӑраҫҫӗ.

*11-мĕш задача.* Çакăнта кăтартса панă кашни япала **мĕн туни** çинчен е унпа **мĕн пулни** çинчен каласа парăр. Кирлĕ сказуемăйне аялта çырнă сăмахсенчен суйласа илĕр.

*Тимĕрçĕ шаккать.* Çĕвĕçĕ... Писатель... Учитель...
*Хĕвел пăхать.* Çил... Пĕлĕт... Шыв...
*Пăчăкă тататъ.* Сава... Мăлатук... Çĕçĕ...
*Куккук авăтать.* Хур... Шăпчăк... Кăвакал...

Кирлĕ сăмахсем: *какалать, çырать, çĕлет, вĕрентет, касать, шаккать, савалать, юрлать, нартлатать, юхать, вĕрет, шăвать.*

*12-мĕш задача.* Çакăнта панă кашни сказуемое çумне подлежащее тупăр. Подлежащипе сказуемăйне çырса хурăр.

*Лаша кĕçенет.* *Çерçи чĕвĕлтетет.*

| | |
|---|---|
| ... юрлать. | ... кранклатать. |
| ... кăтиклет. | ... найлатать. |
| ... мĕкĕрет. | ... сĕрлет. |
| ... авăтать. | ... кваклатать. |
| ... вылять. | ... макăрать. |

Кирлĕ сăмахсем: *хурт, автан, чăхă, тăри, ĕне, шапа, сурăх, вăрăмтуна, сăхан, путек.*

*13-мĕш задача.* Çакăнта панă кашни подлежащее çумне сказуемое тупăр та пулнă предложение сăмахпа каласа парăр.

Шăнкăрч.... Хĕвел.... Çумăр.... Аслати.... Çиçĕм.... Тăри.... Пулă.... Кĕтӳ.... Çырма.... Панулми.... Çĕрулми.... Çерçи....

**Ансăр предложенисем подлежащипе сказуемăйран пулаççĕ.**

Тĕслĕхсем: *Кун кĕскелчĕ. Çĕр вăрăмланчĕ.*

*14-мĕш задача.* Çак предложенисене çырса илĕр. Подлежащине пĕр йĕрпе, сказуемăйне икĕ йĕрпе аялтан туртăр.

## Кĕркунне.

Çу иртрĕ. Кĕр çитрĕ. Кунсем кĕскелчĕç. Çĕрсем вăрăмланчĕç. Хирсем çаралчĕç. Авăн пĕтнĕ. Çумăр çăвать.

Вăрман саралчĕ. Çулçăсем тăкăнаççĕ. Тăм ÿккелет. Калча симĕсленет. Ачасем вĕренеççĕ.

*15-мĕш задача.* Çак сăвва вуласа тухăр. Сăввăн кашни пайĕнче миçе предложени? Сăввăн кашни пайне уйрăм ят парса тухăр.

## Çулталăк вăхăчĕсем.

1. Юр ирĕлет.
Çĕр кĕскелет.
Шăнкăрч юрлать.
Курăк шăтать.

2. Хĕвел пĕçертет.
Çĕрçырли пиçет.
Сăка çурăлать.
Тулă пулать.

3. Кун кĕскелет.
Çĕр нÿрленет.
Шăнкăрчсем кайнă.
Хирсем çаралнă.

4. Хĕвел ăшăтмасть.
Чĕкеç курăнмасть.
Хир шап-шурах.
Тăман ахăрать.

*16-мĕш задача.* Кашни картинка çинчен пĕрер предложени туса çырăр. Подлежащисене пĕр йĕрпе, сказуемăйсене икĕ йĕрпе аялтан туртăр.





*17-мĕш задача.* Сулахай енчи предложенисене сылтăм енчисемпе танлаштарса пăхăр. Хăш енче анлă предложенисем? Хăш енче ансăр предложенисем?

| | |
|---|---|
| Иван вулать. | Иван кӗнеке вулать. |
| Анна ҫырать. | Анна ҫыру ҫырать. |
| Ачасем вулаҫҫӗ. | Ачасем лайӑх вулаҫҫӗ. |
| Ачасем ҫыраҫҫӗ. | Ачасем хитре ҫыраҫҫӗ. |
| Трактор кӗрлет. | Хурҫӑ трактор хирте кӗрлет. |
| Калча ӳсет. | Симӗс калча хунаса ӳсет. |
| Хур ишет. | Шурӑ хур шывра ишет. |
| Кӗтӳ ҫӳрет. | Ешӗл улӑхра кӗтӳ ҫӳрет. |

Анлӑ предложенире подлежащипе сказуемӑйсӑр пуҫне урӑх сӑмахсем те пулаҫҫӗ. Вӗсем хӑшӗ подлежащие, хӑшӗ сказуемӑя ӑнлантарса параҫҫӗ. Ҫавӑн пек ӑнлантару сӑмахӗсене **кӗҫӗн членсем** теҫҫӗ.

***18-мӗш задача.*** Предложенисене ҫырса илӗр. Кӗҫӗн членсене хумлӑ йӗрпе аялтан туртса тухӑр.

Эпир хамӑрӑн тӑван ҫӗршыва юрататпӑр. Пирӗн ҫӗршывра ӗҫхалӑхӗ телейлӗ пурӑнать. Колхозсенче тырӑ ӑнса пулать. Ҫулсерен ҫӗнӗ заводсем хутшӑнаҫҫӗ. Ҫӗнӗ шкулсем уҫӑлаҫҫӗ. Халь ялсенче те электростанцисем ӗҫлеҫҫӗ.

Пирӗн ҫӗршыва парти ертсе пырать. Пирӗн ҫӗршыва Сталин ертсе пырать. Пирӗн ҫӗршыва тӑшмансенчен Хӗрлӗ Ҫар сыхлать.

***19-мӗш задача.*** Ыйтусем выРӑнне кӗҫӗн членсем кӳртсе анлӑ предложенисем туса ҫырӑр.

## Пулӑ тытни.

Ачасем *(ӑҫта?)*... кайрӗҫ. Вӗсем (*мӗн?*)... илсе кайрӗҫ. (*Мӗнле?*)... пулӑсем (*ӑҫта?*)... ишсе ҫӳреҫҫӗ. Ачасем (*мӗн?*)... яраҫҫӗ. Пулӑсем (*мӗне?*)... ҫакланаҫҫӗ. Петӗр (*мӗн?*)... туртса кӑларчӗ. (*Мӗнле?*)... пулӑ (*мӗнтен?*)... вӗҫерӗнсе кайрӗ.

Тӗслӗх: *Ачасем пулла кайрӗҫ.*

***20-мӗш задача.*** „Пулӑ тытни“ статьяри предложенисенче мӗнле сӑмах подлежащие, мӗнле сӑмах сказуемӑя ӑнлантарса панине чертежсемпе кӑтартса парӑр.

Тĕслĕх:




***21-мĕш задача.*** Çак ансăр предложенисенчен, кĕçĕн членсем кўртсе, анлă предложенисем тăвăр та каласа парăр.

Хĕл çитрĕ. Çул ўкрĕ. Хир шуралчĕ. Ачасем савăнаççĕ. Ачасем ярăнаççĕ. Çунашкасем вĕлтлетеççĕ. Конькисем чăкăртатаççĕ. Шавлани илтĕнет. Юрă янăрать.

***22-мĕш задача.*** Чертежсенчи кашни предложение йĕркенйĕркен çырса тухăр.






***23-мĕш задача.*** Тетрадьсем çине çакăн пек чертежсем тăвăр. Вĕсем çине аялта панă предложенисене вырнаçтарса тухăр.




Иккĕмĕш пятилетка ăнăçлă иртрĕ. Виççĕмĕш пятилетка пуçланчĕ. Çĕршыв хăватлăн ӳсет.

***24-мĕш задача.*** Кĕнеке çинчи пек чертежсем ӳкерсе, çак предложенисене чертежсем ăшне вырнаçтарăр.

1. Пионер хăйĕн вăхăтне хисеплет. 2. Пионер комсомола пулăшать. 3. Кашни пионер пĕлӳсем илме тăрăшать. 4. Пионер шкул пурлăхне сыхлать. 5. Пионер шкулта лайăх вĕренет.









***25-мӗш задача.*** Скобкӑри ыйтусем тӑрӑх ӑнлантару сӑмахӗсем тупса, анлӑ предложенисем ҫырӑр.

Тӗслӗх: *Кӗтӳҫӗ ҫулла хирте кӗтӳ кӗтет.*

Ачасем (*хӑҫан? ӑҫта? мӗнле?*)... выляҫҫӗ.
Кӗтӳҫӗ (*хӑҫан? ӑҫта? мӗн?*)... кӗтет.
Пулӑҫӑ (*хӑҫан? ӑҫта? мӗн?*)... тытнӑ.
Колхозниксем (*мӗнле? ӑҫта? хӑҫан? мӗн?*) выраҫҫӗ.
Учитель (*камсене? мӗн-мӗн тума?*)... вӗрентет.
Йывӑҫсем (*ӑҫта? мӗнле?*)... ӳсеҫҫӗ.
Гудок (*хӑҫан? мӗнле?*)... кӑшкӑрать.

## 2 §. Предложенири сӑмахсем улшӑнни.

***26-мӗш задача.*** Статьяна вуласа тухӑр. Паллӑ тунӑ **вӑрман** сӑмах кашни предложенире мӗнле улшӑннине асӑрхӑр.

### Вӑрман.

Пирӗн ял ҫумӗнчех **вӑрман** пур. **Вӑрманпа** юнашар шыв юхса выртать. **Вӑрманӑн** лаптӑкӗ чылай пысӑк. Ҫуллахи кунсенче эпир **вӑрмана** час-часах каятпӑр. **Вӑрманӑн** илемӗпе савӑнатпӑр. Ҫырла вӑхӑтӗнче **вӑрмана** ҫырла татма

çӳретпĕр. **Вăрманта** кайăксем юрлаççĕ. Çулла **вăрмантан** тухас та килмест.

***27-мĕш задача.*** „**Вăрман**" ятлă статьяран **вăрман** сăмаха пур предложенисенчен те çырса илĕр, сăмахĕсене пĕр-пĕрин айне туса çырăр. Сăмах вĕçне кĕске йĕрпе уйăрса çырăр.

Тĕслĕх: *Вăрман.*
*Вăрман-па.*

***28-мĕш задача.*** а) „**Ударлă бригада**" ятлă статьяна çырса илĕр. Паллă тунă бригада сăмахăн кашни форми хыççăн скобкăра унăн ыйтăвне лартăр: **мĕнĕн**? е **мĕнре?** е **мĕнпе?** е **мĕн**? б) **Бригада** сăмахăн кашни формине пĕр-пĕрин айне туса çырса илĕр. Сăмах вĕçне кĕске йĕрпе уйăрса çырăр.

## Ударлă бригада.

Пирĕн атте ĕçлекен виççĕмĕш **бригада** — ударлă бригада. Вăл **бригадăн** пур членĕсем те ударниксем. **Бригадăна** кăçал преми панă. Виççĕмĕш **бригадăпа** ытти бригадăсем ăмăртса ĕçлеççĕ. **Бригадăра** дисциплина питĕ çирĕп. Виççĕмĕш **бригадăран** ытти бригадăсем ударлă ĕçлеме вĕренеççĕ.

***29-мĕш задача.*** Çак сăвва вуласа тухăр. Паллă тунă сăмах кашни предложенире мĕнле улшăннине асăрхăр.

## Тимĕрçĕ.

Хĕвел пăхать тӳпере.
**Тимĕрçĕ** шаккать **тимĕре**.
Хĕртнĕ **тимĕр** лапчăнать.
Чăнкки-чанкки янăрать.

**Тимĕрçĕ** алли пит ăста,
Тем те тăвать **тимĕртен**.
**Тимĕрçĕсем** колхозра
Питĕ кирлĕ ăстасем.



**Тимĕр, тимĕр-çĕ, тимĕр-тен, тимĕр-çĕ-сем** сăмахсене танлаштарса пăхăр. **Тимĕр** — сăмах тĕпĕ. **Тимĕр-çĕ, тимĕр-**

**тен, тимĕр-çĕ-сем** сăмахсенче виççĕшĕнче те тĕпĕ **тимĕр,** анчах тĕпĕсĕр пуçне сăмахсен вĕçĕнче **çĕ, тен, çĕ**-сем аффикссем пур.

Аффикс хушăнса пулнă сăмаха **аффикслă сăмах** теççĕ. Аффикс хушăнман сăмаха **аффикссăр сăмах** теççĕ. Аффикссăр сăмах пĕтĕмĕшпех **сăмах тĕпĕ** пулса тăрать. Ун çумне аффикссем хушса урăх сăмахсем тума пулать.

***30-мĕш задача.*** Çакăнта панă сăмахсене кўртсе предложенисем тăвăр.

Т ĕ с л ĕ х: *Пирĕн колхозăн лашасем лайăх.*

| | |
|---|---|
| колхоз-ăн | вăрман-лă |
| колхоз-а | вăрман-лăх |
| колхоз-па | вăрман-ти |
| колхоз-ра | вăрман-ĕ |
| колхоз-ран | вăрман-шăн |

Сăмаха улăштармашкăн е пĕр сăмахран тепĕр сăмах тумашкăн сăмах тĕпĕ çумне аффикс хушмалла. Аффикссем сăмахăн улшăнакан пайĕ пулса тăраççĕ. Сăмах тĕпĕ сăмахăн улшăнман пайĕ пулса тăрать.

***31-мĕш задача.*** Çак сăмахсене çырса илĕр. Аффикссене сăмах тĕпĕнчен кĕске йĕрпе уйăрса çырăр.

Т ĕ с л ĕ х: *Пахча-сем.*

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Пахчасем | Шывлă | Паянхи | Чăрăшлăх | Совхоз |
| Пахчаçă | Шывсăр | Ĕнерхи | Чăрăшăн | Совхозăн |
| Пахчалăх | Шывсем | Каçхи | Чăрăшлă | Совхозра |
| Пахчам | Шывăм | Кĕрхи | Чăрăшсăр | Совхоза |

***32-мĕш задача.*** Çакăнта çырнă сăмахсене вуласа тухăр, унтан çырса илĕр. Сăмах аффиксне сăмах тĕпĕнчен кĕске йĕрпе уйăрăр.

1. Пўрт, пўрте, пўртпе, пўртре, пўртрен.
2. Пўртлĕх. Пўртри. Пўртлĕ.
3. Пуçлăх. Пуçла.
4. Ларчăк. Хырчăк. Шанчăк.
5. Ĕçле. Ĕçлĕ. Ĕçри. Ĕçчен.

***33-мěш задача.*** Сăмахсене тунă чухне çак аффикссемпе усă кураççě.

1. *çă, çě* (пулăçă, кěтÿçě, пахчаçă, тимěрçě, вěçевçě).
2. *лăх, лěх,* (хуçалăх, хурăнлăх, вěтлěх, шěшкěлěх, шурлăх, арпалăх, кěпелěх).
3. *у, ÿ* (çыру, лару, суту, ăмăрту, вěренÿ, çěкленÿ).
4. *лă, лě, ллă, ллě* (ăслă, вăйлă, кěрneклě, тěреклě, пахчаллă, йěркеллě).
5. *сăр, сěр* (çилсěр, парăнусăр).
6. *ла, ле, лла, лле* (кайăкла, чěкеçле, лапталла, чушкăлла, килелле).
7. *ри, ти, чи* (ялти, хулари, варринчи).
8. *хи* (çурхи, кěрхи, хальхи, пěлтěрхи, ěлěкхи).
9. *тар, тер, ттар, ттер* (çыртар, вěртер, вулаттар, ěçлеттер).

***34-мěш задача.*** Çак статьяна çырса илěр. Аффикслă сăмахсен аффиксěсене йěрпе уйăрса çырăр.

## К ě т ÿ.

Хěвел çÿлелле улăхнă. Кěтÿ тапăрта тăрать. Выльăхсем хăшě выртаççě, хăшě шыв ěçеççě. Качакасем çÿлě çыран çине улăхаççě. Пěр-пěрне майракисемпе шăк-шак! тěксе илеççě. Кěтÿçě апат çиет. Кăнтăр иртрě. Выльăхсем канчěç. Кěтÿçě выльăхсене курăк çиме хирелле хăваласа кайрě.

***35-мěш задача.*** Çак сăмахсене вуласа тухăр. Хытă сăмахăн аффиксě мěнле пулать? Çемçе сăмахăн аффиксě мěнле пулать?

| | | | |
|---|---|---|---|
| пулă-çă | хăват-лă | телей-лě | тимěр-çě |
| пахча-çă | хавас-лă | кěрнек-лě | çěвě-çě |
| çыру-çă | хастар-лă | тирпей-лě | шерепе-ллě |
| сăвă-çă | паттăр-лă | йěрке-ллě | шерепе-сěр |

Хытă сăмахăн аффиксě те **хытă** пулать, çемçе сăмахăн аффиксě те **çемçе** пулать.

***36-мěш задача.*** Çак сăмахсене вěсем çумне **лă** е **лě** аффикс хушса çырса илěр. Хытă сăмах çумне **лă** аффикс хушăнать, çемçе сăмах çумне **лě** аффикс хушăнать.

| | | |
|---|---|---|
| вăй-лă | сĕт... | турат... |
| тĕп... | нӳр... | хăват... |
| хут... | сурт... | çунат... |
| шут... | чул... | кăвар... |

***37-мĕш задача.*** Çак аффикссăр сăмахсенчен май килекен аффикссем хушса аффикслă сăмахсем тăвăр.

| | | |
|---|---|---|
| ăрат | хыр | кĕпе |
| çурт | хурăн | арпа |
| пӳрт | вăрман | кĕрĕк |
| сăрт | çăка | сăхман |

***38 мĕш задача.*** Çак сăмахсен тĕпĕсене тата вĕсен аффиксĕсене асăрхăр. Хытă сăмахсем çумне мĕнле аффикссем хушăнаççĕ?

| | | | |
|---|---|---|---|
| ача-сем | картус-ĕ | тăваттă-мĕш | çирĕп-скер |
| çын-сем | çăлкуç-ĕ | пуçла-мĕш | лайăх-скер |
| паттăр-сем | саппун-ĕ | кайнă-ччĕ | паттăр-скер |
| маттур-сем | ур-и | пулнă-ччĕ | маттур-скер |

***Сем, ĕ, и, мĕш, ччĕ, скер*** аффикссем — **мăшăрсăр** аффикссем. Вĕсен хытă мăшăрĕ çук, çавăнпа вĕсем хытă сăмахсем çумне те çемçе формăпах хушăнаççĕ.

***39-мĕш задача.*** Çакăнти пĕлтерĕшĕ енчен пĕр пекрех предложенисен уйрăмлăхне кăтартса парăр.

| **Пĕрреллĕ хисеп.** | **Нумайлă хисеп.** |
|---|---|
| Арман авăр-ать. | Армансем авăр-аççĕ. |
| Аэроплан вĕç-ет. | Аэроплансем вĕç-еççĕ. |
| Автомобиль чуп-ать. | Автомобильсем чуп-аççĕ. |
| Трактор кĕрл-ет. | Тракторсем кĕрл-еççĕ. |

**Сем** аффикс япала нумайййине пĕлтерет.

**Аççĕ, еççĕ** аффикссем ĕçе нумаййăн тунине пĕлтереççĕ (*пĕлĕтсем шăваççĕ, кайăксем вĕçеççĕ*).

**Ать, ет** аффикссем ĕçе пĕччен тунине пĕлтереççĕ (*гудок кăшкăрать, рабочи ĕçлет*).

# 3 §. Хутлă сăмахсем.

***40-мĕш задача.*** Çак статьяна вуласа тухăр. Паллă тунă сăмахсем мĕнле пулнине асăрхăр.

## Пирĕн йывăç пахчи.

Пирĕн пĕчĕк йывăç пахчи пур. Ăна **асаттепе асанне** хăйсем çамрăк чухнех лартнă. Пахчара **улмуççисем**, вишня, хурлăхан йывăççисем пур.

Пирĕн пахчара **панулми** ăнса пулать. Хăш туратсем хăйсен улмисене аран çĕклесе тăраççĕ. Асаттепе атте ытла усăнса анакан туратсене юплĕ патаксемпе тĕкĕлесе хураççĕ. Кашни **кĕркуннех** эпир пахчаран **панулмисем** татса кĕретпĕр.

Пирĕн **панулми çултаλăкĕпех** çиме çитет. Анне хĕлле те кашни апатрах пире **тĕпсакайĕнчен** илемлĕ панулмисем илсе тухса парать.

Çакăнта паллă тунă сăмахсем кашниех икĕ е виçĕ тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ сăмах пĕрлешнипе пулнă: асатте — аслă атте, асанне — аслă анне, улмуççи — улма йывăççи, тĕпсакай — тĕп сак айĕ.

> Икĕ е виçĕ тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ сăмах пĕрлешнипе пулнă сăмахсене **хутлă сăмахсем** теççĕ.
>
> Хутлă сăмахсене пĕрле çыраççĕ.

***41-мĕш задача.*** Çакăнта панă хутсăр сăмахсене пĕрлештерсе хăвăр хутлă сăмахсем тăвăр.

Т ĕ с л ĕ х: *Ура айĕ — урай.*

| | | | |
|---|---|---|---|
| ура айĕ | кĕр кунĕ | çул пуçĕ | хура тулă |
| тĕшĕ тырă | çăл куçĕ | шыв сикки | çăра уççи |
| çĕр улми | çĕр кăмрăкĕ | тунти кун | çур тырри |
| çур кунĕ | авăн карти | çăм ату | ĕç халăхĕ |

***42-мĕш задача.*** Çак хутла сăмахсене кӳртсе предложенисем тăвăр.

Т ĕ с л ĕ х: *Папанинпа унăн юлташĕсем Çурçĕр полюсĕ патĕнче хĕл каçнă.*

Кĕркунне, çуркунне, çурçĕр, кăçал, тырпул, анкарти.

***43-мĕш задача.*** Çак предложенисене вуласа тухăр. Мăшăр сăмахсене çырса илĕр.

1. Шыв-шур типсен, çураки пуçланать. 2. Лайăх ĕçлекен колхозсем çуракине пилĕк-ултă кунтах пĕтереççĕ. 3. Колхоз уй-хирĕсенче халь тракторсем, комбайнсем ĕçлеççĕ. 4. Ĕлĕкхи хăрăк-харăк сухапуçĕ вырăнне халь шултра машинăсемпе усă кураççĕ.

Астăвăр: Мăшăр сăмахсене кĕске йĕр урлă çыраççĕ.

Кам? камăн? кама? тесе çынсем çинчен ыйтаççĕ.

Мĕн? мĕнĕн? мĕне? тесе ытти япаласем çинчен ыйтаççĕ.

***44-мĕш задача.*** Çак сăвва çырса илĕр. Хутлă сăмахсене пĕр йĕрпе, мăшăр сăмахсене икĕ йĕрпе аялтан туртăр.

## Çамрăклăх сăвви.

Çĕршывра сӳнми çăлкуçăн
яшлăх, çамрăклăх тапать.
Харсăр çамрăклăх! Тап уççăн,
эсĕ тивĕç мухтава.

Çеçенхир, сăрт-ту, шыв-шурĕ,
сывлăш, тинĕс, вăрмансем,—
пур çĕрте те сăвă-юрă,
янăраççĕ юрăсем.

Заводра та, уй-хирте те
эп куратăп, эп илтеп,—
çуркунне пек пур çĕрте те
çамрăклăх вĕрет пирте.

Хум-шавпа карап пырать-и,
парашют-и карăнать,—
пур çĕрте те-çке куратăп,
яшлăх-çамрăклăх, сана.

Çĕршыв аслă, çулĕ такăр.
Аслă çулпуç пирĕнпе.
Çĕнтерӳллĕн утăмлатпăр
Ленин — Сталин çулĕпе.

*45-мӗш задача:* „Тӑван чӗлхепе вуламалли кӗнекерен“ „Пуканесен бригади“ ятлӑ сӑвва вуласа тухӑр. Сӑвӑра тӗл пулакан хутлӑ сӑмахсене уйӑрммӑн, мӑшӑр сӑмахсене уйӑрммӑн ҫырса илӗр.

*46-мӗш задача.* Ҫак хутлӑ сӑмахсем мӗнле пулнине ӑнлантарса парӑр.

Кӑҫал, кӗҫӗр, питҫӑмарти, куҫхарши, кӗрҫип, юланут, турахуп, умсӑмах, тымарҫимӗҫ, ҫулҫӳрен, вунпӗр, сакӑрвуннӑ, эрнекун, хулпуҫҫи, ҫӗрмамӑк, чӗрчун, алшӑлли, кайӑкхур, улмуҫҫи, ҫӑраҫҫи, уйпуҫ, ҫутҫанталӑк.

---

## 4 §. Япала ячĕсем.

***47-мĕш задача.*** Предложенисене çырса илĕр. **Кам?** е **мĕн? камсем?** е **мĕнсем?** ыйтупа ыйтăнакан сăмахсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

Павăл кĕнеке вулать. Маня çырать. Эпĕ задача шутлатăп. Анне мана пулăшать. Атте хаçат вулать. Пĕчĕк ачасем выляççĕ. Вĕсене атте пуканесем илсе панă.

*Павăл, Маня, анне, атте* сăмахсем **кам?** ыйтупа ыйтăнаççĕ.

*Ачасем* сăмах **камсем?** ыйтупа ыйтăнать.

*Пуканесем* сăмах **мĕнсем?** ыйтупа ыйтăнать.

*Кĕнеке, задача, хаçат* сăмахсем **мĕн?** ыйтупа ыйтăнаççĕ.

Çак сăмахсем пурте тĕрлĕ **япаласен ятне** пĕлтереççĕ.

***48-мĕш задача.*** Предложенисене çырса илĕр. **Кам? мĕн?** ыйтусем вырăнне кирлĕ сăмахсене кӳртсе çырăр.

| | |
|---|---|
| Пурана (*кам?*) пурать. | Тырра (*камсем?*) выраççĕ. |
| Тимĕре (*кам?*) шаккать. | Кĕлтене (*камсем?*) çыхаççĕ. |
| Пулла (*кам?*) тытать. | Шкулта (*камсем?*) вĕренеççĕ. |
| Кĕрĕке (*кам?*) çĕлет. | Тырра (*камсем?*) хураллаççĕ. |

***49-мĕш задача.*** а) Килти сават-сапа ячĕсене, сĕтел-пукан ячĕсене çырăр. б) Выльăх-чĕрлĕхсен, тискер кайăксен, вĕçен кайăксен ячĕсене çырăр.

***50-мĕш задача.*** „Çумăр хыççăн“ ятлă сăвăран çутçанталăкри пулăмсене пĕлтерекен сăмахсене çырса илĕр.

### Çумăр хыççăн.

Акă тăвăл чарăнать,
аслати те йăвашрах.
Вăйлă çумăр тек çумасть
уя тухас хăвăртрах.

Ытла аван, пит тўлек
çумăр хыççăн улăхра.
Хаяр тăвăл пулман пек,
аслати те аякра.

Пĕлĕт хĕрри уçăлать,
çиçĕм çурмасть сывлăша.
Пăх, асамат кĕперри —
мĕн пур ун пек чиперри?

Çынсене, чĕрчунсене, тĕрлĕ хатĕрсене, çĕршыври пулăмсене грамматикăра пурне те **япала** теççĕ.

Тĕрлĕ япаласен ятне пĕлтерекен сăмахсене **япала ячĕсем** теççĕ.

***51-мĕш задача.*** Асăрхăр: хăçан **кам?** тесе, хăçан **мĕн?** тесе ыйтаççĕ.

Кам калаçать? — Çын.
Мĕн авăтать? — Автан.
Кампа вылятăн? — Яккупа.
Мĕнпе вылятăн? — Çăмхапа.

Этеме пĕлтерекен япала ячĕсене **кам? кама? кампа? камра? камран?** тесе ыйту параççĕ, ытти япала ячĕсене **мĕн? мĕне? мĕнпе? мĕнре? мĕнрен?** тесе ыйту параççĕ.

## 5 §. Япала ячĕсем предложенире подлежащее е кĕçĕн член пулни.

Япала ячĕсем предложенире **подлежащее** е **кĕçĕн член** пулаççĕ.

***52-мĕш задача.*** Чертежсемпе кăтартнă предложенисене пăхса тухăр. Кашни уйрăм предложенире **хĕл** сăмах мĕнле член пулса тăрать? Пирвайхи предложенире мĕнле ыйтупа ыйтăнать? Иккĕмĕш предложенире?







***53-мĕш задача.*** а) Çак статьяна вуласа тухăр. **Завод** сăмах кашни предложенире мĕнле улшăннине асăрхăр.

б) **Завод** сăмах подлежащее пулса тăракан предложенисене çырса илĕр.

## Завод.

Пирĕн ял çывăхĕнче **завод** ларать. Вăл **завод** крахмал туса кăларать. **Заводра** ман пичче те ĕçлет. Эпĕ пичче патне **завода** темиçе те кайса курнă. **Заводăн** çурчĕсене электричествăпа çутатаççĕ. **Заводăн** машинисем электричествăпа ĕçлеççĕ.

***54-мĕш задача.*** Çак статьяран **шăнкăрч** сăмах кĕçĕн член пулса тăракан предложенисене çырса илĕр.

## Шăнкăрч.

**Шăнкăрч** пирĕн пата çуркунне вĕçсе килет. **Шăнкăрчăн** усси питĕ пысăк. **Шăнкăрча** çынсем юратаççĕ. Ăна йăва туса параççĕ. **Шăнкăрчра** çынсем хăйсен тусне кураççĕ. **Шăнкăрч** хуртсене çиет. Вăл сиенлĕ хуртсене пĕтерет. **Шăнкăрчран** усăллăрах кайăк сахал.

***55-мĕш задача.*** Çак статьяна вуласа тухăр, **ĕç** сăмах хăш предложенире подлежащее, хăш предложенире кĕçĕн член пулнине кăтартса парăр.

## Ĕç.

Ĕлĕк **ĕç** çынна тарăхтарнă. Пирĕн **ĕçпе** ĕлĕк капиталистсемпе помещиксем пуйса пынă.

Халь ĕççыннине **ĕç** хаваслантарать. **Ĕç** пире телейлĕ пурăнма май парать. **Ĕç** çĕршыва тĕреклетет. Эпир **ĕçе** хисеплетпĕр. **Ĕçпе** мухтава тухатпăр.

# 6 §. Япала ячĕсен падежĕсем.

| | | |
|---|---|---|
| 1. **Кам** вĕренет? | *йăмăк* | *ача* |
| 1. **Мĕн** ӳсет? | *хурăн* | *çăка* |
| 2. **Камăн** кĕнеке пур? | *йăмăк-ăн* | *ача-н*(*ăн*) |
| 2. **Мĕнĕн** çулçă пур? | *хурăн-ăн* | *çăка-н*(*ăн*) |
| 3. **Кама** тетрадь пана? | *йăмăк-а* | *ача-на* |
| 3. **Мĕне** çумăр кирлĕ? | *хурăн-а* | *çăка-на* |
| 4. **Кама** куртăн? | *йăмăк-а* | *ача-на* |
| 4. **Мĕн** куртăн? | *хурăн* | *çăка* |

| | | |
|---|---|---|
| 5. **Кампа** ларатăн? | *йăмăк-па* | *ача-па* |
| 5. **Мĕнпе** савăнатăн? | *хурăн-па* | *çăка-па* |
| 6. **Камра** линейка. | *йăмăк-ра* | *ача-ра* |
| 6. **Мĕнре** (**ăçта**) сухăр çук? | *хурăн-та* | *çăка-ра* |
| 7. **Камран** хут илтĕн? | *йăмăк-ран* | *ача-ран* |
| 7. **Мĕнрен** арча турăн? | *хурăн-тан* | *çăка-ран* |

Япала ячĕсем **кам? мĕн? камăн? мĕнĕн? кама? мĕне? мĕн? кампа? мĕнпе? камра? мĕнре? ăçта? камран? мĕнрен? ăçтан?** ыйтусем тăрăх тĕрлĕ аффикссем хушса улшăнаççĕ.

Япала ячĕсен çакăнта кăтартнă ыйтусенчен килекен кашни формине **падеж** теççĕ.

Япала ячĕсем падежсем тăрăх улшăннине **вĕçленни** теççĕ.

Падежсем çиччĕ:

1. **Ят падежĕ,** унăн ыйтăвĕсем *кам? мĕн?*
2. **Камăнлăх падежĕ,** ,, *камăн? мĕнĕн?*
3. **Пару падежĕ,** ,, *кама? мĕне?*
4. **Тăву падежĕ,** ,, *кама? мĕне? мĕн?*
5. **Пĕрлелĕх падежĕ,** „ *кампа? мĕнпе?*
6. **Вырăн падежĕ,** ,, *камра? мĕнре? ăçта?*
7. **Туху падежĕ,** ,, *камран? мĕнрен? ăçтан?*

***56-мĕш задача.*** Çак предложенисене вуласа тухăр, кашни предложенире **юр** сăмахăн падежне тата унăн ыйтăвне кăтартса парăр.

Шурă **юр** çăвать те çăвать. Пĕтĕм хир **юрпа** витĕнчĕ. Эпир шкулалла утатпăр. **Юрăн** çемçе пĕрчисем пирĕн тумтир çине лараççĕ. Шкула çитрĕмĕр. Тумтир çинчи **юра** силлерĕмĕр. Шкултан таврăнсан, эпир **юртан** кĕлетке тумалла вылярăмăр.

***57-мĕш задача.*** Çакăнта кăтартнă сăмахсемпе предложенисем тăвăр. Пулнă предложенисене çырса хурăр. Кăтартнă сăмахăн кашни форми тăрне падеж ятне, ыйтăвне çырса хурăр.

Вырăн п. ăçта?

Тĕслĕх: *Ачасем шкулта вĕренеççĕ.*

| | |
|---|---|
| шкула... | çырма... |
| шкулта... | çырмара... |
| шкул... | çырмана... |
| шкултан... | çырмаран... |
| шкулпа... | çырмапа... |
| шкулăн... | çырманăн... |

## 7 §. Япала ячĕсем пĕрреллĕ тата нумайлă хисепре пулни.

*58-мĕш задача.* Сулахай енчи предложенисемпе сылтăм енчи предложенисене танлаштарăр. Вĕсем хушшинчи уйрăмлăха асăрхăр.

| | |
|---|---|
| Аэроплан вĕçет. | Аэроплансем вĕçеççĕ. |
| Автомобиль пырать. | Автомобильсем пыраççĕ. |
| Гудок кăшкăрать. | Гудоксем кăшкăраççĕ. |
| Рабочи ĕçлет. | Рабочисем ĕçлеççĕ. |
| Тимĕрçĕ шаккать. | Тимĕрçĕсем шаккаççĕ. |

Япала ячĕсен икĕ хисеп пулать: **пĕрреллĕ хисеп** тата **нумайлă хисеп.**

Пĕр япалана пĕлтерекен япала ячĕ пĕрреллĕ хисепре пулать (ял, хула).

Икĕ япалана е нумай япалана пĕлтерекен япала ячĕсем нумайлă хисепре пулаççĕ (ялсем, хуласем).

Нумай япалана пĕлтерекен япала ячĕсене тумашкăн пĕр япалана пĕлтерекен япала ячĕ çумне **сем** аффикс хушмалла.

*59-мĕш задача.* Çак япала ячĕсене нумайлă хисепре туса çырăр. Нумайлă хисепри япала ячĕсен аффиксĕсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

| | |
|---|---|
| Ача — **ачасем.** | куккукăн — **куккуксен(ĕн)** |
| калча — ... | куракăн — ... |
| кĕлте — ... | автанăн — ... |

| | |
|---|---|
| вĕлле — ... | чмулкачăн — ... |
| турат — ... | авкан(ăн) —чавка **сен**(ĕн) |
| кĕтӳ — ... | путенен(ĕн) — ... |
| пăри — ... | çырман(ăн) — ... |
| урай — ... | сарайăн — ... |

***60-мĕш задача.*** **Çак предложенисене, паллă тунă япала ячĕсене нумайлă хисепре туса, улăштарса çырса илĕр.**

1. **Колхоз** çуракине хĕллех хатĕрленме тытăнчĕ.

2. Çуракине хатĕрленес ĕçре **ударник** çине тăрса ĕçлерĕ.

3. **Тимĕрçĕ** плугсене срокченех юсаса çитерчĕ.

4. **Конюх** лашасене лайăх апат парса тăчĕ.

5. **Колхозник** вăрлăха тасатса хатĕрлерĕ.

6. **Бригадир** çуракине срокченех хатĕрленсе çитни çинчен правление пĕлтерчĕ.

## 8 §. Хупă сасăпа пĕтекен япала ячĕсем вĕçленни.

Вĕçленĕвĕн тĕслĕхĕсем.

Пĕрреллĕ хисеп.

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ят. | **Кам?** | *юлташ* | *Петĕр* |
| К. | **Камăн?** | *юлташăн* | *Петĕрĕн* |
| П. | **Кама панă?** | *юлташа* | *Петĕре* |
| Т. | **Кама куртăн?** | *юлташа* | *Петĕре* |
| Пр. | **Кампа?** | *юлташпа* | *Петĕрпе* |
| В. | **Камра?** | *юлташра* | *Петĕрте* |
| Тх. | **Камран?** | *юлташран* | *Петĕртен* |

Нумайлă хисеп.

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ят. | **Камсем?** | *юлташсем* | *пĕлĕшсем* |
| К. | **Камсен(ĕн)?** | *юлташсен(ĕн)* | *пĕлĕшсен(ĕн)* |
| П. | **Камсене преми панă?** | *юлташсене* | *пĕлĕшсене* |
| Т. | **Камсене куртăн?** | *юлташсене* | *пĕлĕшсене* |
| Пр. | **Камсемпе?** | *юлташсемпе* | *пĕлĕшсемпе* |
| В. | **Камсенче?** | *юлташсенче* | *пĕлĕшсенче* |
| Тх. | **Камсенчен?** | *юлташсенчен* | *пĕлĕшсенчен* |

***Я, н, р*** сасăпа пĕтекен сăмахсем вырăнпа туху падежĕсенче ***ра, ре, ран, рен*** аффикссем вырăнне ***та, те, тан, тен*** аффикссене йышăнаççĕ.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Ят. | **Мĕн ӳсет?** | *йывăç* | *çирĕк* | *палан* |
| К. | **Мĕнĕн турачĕ?** | *йывăç**ăн*** | *çирĕк**ĕн*** | *палан**ăн*** |
| П. | **Мĕне ăшă кирлĕ?** | *йывăç**а*** | *çирĕк**е*** | *палан**а*** |
| Т. | **Мĕн(е) курнă?** | *йывăç(**а**)* | *çирĕк(**е**)* | *палан(**а**)* |
| Пр. | **Мĕнпе?** | *йывăç**па*** | *çирĕк**пе*** | *палан**па*** |
| В. | **Мĕнре?** | *йывăç**ра*** | *çирĕк**ре*** | *палан**та*** |
| Тх. | **Мĕнрен?** | *йывăç**ран*** | *çирĕк**рен*** | *палан**тан*** |

Хытă сăмахсен падеж аффиксĕсем те **хытă** пулаççĕ. Çемçе сăмахсен падеж аффиксĕсем те **çемçе** пулаççĕ.

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ят. | *çеçпĕл* | *хурлăхан* | *хăяр* |
| К. | *çеçпĕл-ĕн* | *хурлăхан-ăн* | *хăяр-ăн* |
| П. | *çеçпĕл-е* | *хурлăхан-а* | *хăяр-а* |
| Т. | *çеçпĕл(е)* | *хурлăхан(а)* | *хăяр(а)* |
| Пр. | *çеçпĕл-пе* | *хурлăхан-па* | *хăяр-па* |
| В. | *çеçпĕл-те* | *хурлăхан-та* | *хăяр-та* |
| Тх. | *çеçпĕл-тен* | *хурлăхан-тан* | *хăяр-тан* |

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ят. | **Мĕнсем**? | *йывăç**сем*** | *çĕмел**сем*** |
| К. | **Мĕнсен(ĕн)**? | *йывăç**сен(ĕн)*** | *çĕмел**сен(ĕн)*** |
| П. | **Мĕнсене**? | *йывăç**сене*** | *çĕмел**сене*** |
| Т. | **Мĕнсем, мĕнсене**? | *йывăç**сем**(**сене**)* | *çĕмел**сем**(**сене**)* |
| Пр. | **Мĕнсемпе**? | *йывăç**семпе*** | *çĕмел**семпе*** |
| В. | **Мĕнсенче**? | *йывăç**сенче*** | *çĕмел**сенче*** |
| Тх. | **Мĕнсенчен**? | *йывăç**сенчен*** | *çĕмел**сенчен*** |

Япала ячĕсене нумайлă хисепре вĕçленĕ чухне сăмах тĕпĕ çумне малтан **сем** аффикс, унтан падеж аффиксĕ хутшăнать.

Камăнлăх, пару, тăву, вырăн, туху падежĕсенче **сем** аффикс вырăнне **сен** аффикс пулать.

Нумайлă хисепĕн падеж аффиксĕсем пур сăмахсен те пĕр пекех çемçе пулаççĕ.

***61-мӗш задача.*** Тӗслӗхсене пăхса, çак япала ячӗсене вӗçлесе тухăр:

арман, йӗлтӗр, тумтир, сехет, курăк, пӳлӗм.

***62-мӗш задача.*** Çак статьяна çырса илӗр. Точкăсем выранне кирлӗ падеж аффиксӗсене лартса пырăр.

## К ӗ р ӗ к.

Манăн кӗрӗк çӗнӗ. Кӗрӗк... мана кăçал çӗлетсе пачӗç. Кӗрӗк... çухине путек тирӗнчен туса пачӗç. Халь эпӗ шкула кӗрӗк... çӳретӗп. Кӗрӗк... эпӗ тирпейлӗ тытатăп: йӗпетместӗп, вараламастăп. Шкула çитсен, кӗрӗк... хывса çакатăп.

# 9 §. А, е уçă сасăсемпе пӗтекен япала ячӗсем вӗçленни.

Вӗçленӗвӗн тӗслӗхӗсем.

| | | |
|---|---|---|
| Ят. | *арча* | *кӗпе* |
| К. | *арча-н(ăн)* | *кӗпе-н(ӗн)* |
| П. | *арча-на* | *кӗпе-не* |
| Т. | *арча-(на)* | *кӗпе-(не)* |
| Пр. | *арча-па* | *кӗпе-пе* |
| В. | *арча-ра* | *кӗпе-ре* |
| Тх. | *арча-ран* | *кӗпе-рен* |

**А, е** уçă сасăсемпе пӗтекен япала ячӗсем камăнлăх падежӗнче н(ăн), н(ӗн), пару падежӗнче (хăш чухне тăву падежӗнче те) **на, не** аффикссем йышăнаççӗ.

***63-мӗш задача.*** Тӗслӗхсене пăхса çак япала ячӗсене вӗçлесе тухăр:

çава, эрне, юпа, вӗрене.

***64-мӗш задача.*** Çак статьяна çырса илӗр. Точкăсем выранне кирлӗ падеж аффиксне çырса пырăр.

## Купӑста.

Купӑста—питӗ усӑллӑ ҫимӗҫ. Купӑста... этеме кирлӗ япаласем нумай. Пахчара эпир ҫулсеренех купӑста лартса ӳстеретпӗр. Купӑста... шыв сапса тӑратпӑр, купалатпӑр. Купӑста... тӑварласа та, чӗрӗлле те, апат ҫине ярса та ҫиетпӗр. Тӳнӗ купӑста... кукӑльсем тӑватпӑр.

***65-мӗш задача.*** „Кӗрпе“ сӑмаха тӗрлӗ падежра лартса, предложенисем тӑвӑр.

# 10 §. У, ӳ уҫӑ сасӑсемпе пӗтекен япала ячӗсем вӗҫленни.

Вӗҫленӗвӗн тӗслӗхӗсем.

| | | |
|---|---|---|
| Ят. | *ӑмӑрту* | *вӗренӳ* |
| К. | *ӑмӑртӑв-ӑн* | *вӗренӗв-ӗн* |
| П. | *ӑмӑртӑв-а* | *вӗренӗв-е* |
| Т. | *ӑмӑрту(ӑв-а)* | *вӗренӳ(ӗв-е)* |
| Пр. | *ӑмӑрту-па* | *вӗренӳ-пе* |
| В. | *ӑмӑрту-ра* | *вӗренӳ-ре* |
| Тх. | *ӑмӑрту-ран* | *вӗренӳ-рен* |

***У, ӳ*** уҫӑ сасӑсемпе пӗтекен япала ячӗсем камӑнлӑх падежӗнче тата пару, тӑву падежӗсенче вӗҫӗнчи **у, ӳ** сасӑсене **ӑв, ӗв** сыпӑксемпе ылмаштараҫҫӗ.

***66-мӗш задача.*** Вӗҫленӗвӗн тӗслӗхӗсене пӑхса, ҫак япала ячӗсене вӗҫлесе тухӑр:

ҫыру, чӗнӳ, ҫыхӑну, ҫӗнтерӳ, ӑру, пӗлӳ.

***67-мӗш задача.*** Ҫак статьяна ҫырса илӗр. Точкӑсем вырӑнне, **пуху** сӑмах ҫумне, кирлӗ падеж аффиксӗсене лартса пырӑр.

## Пуху.

Паян колхозӑн пуху... пулчӗ. Пуху... ҫын нумай пуҫтарӑнчӗ. Пуху председательне Иванов юлташа суйларӗҫ. Пуху... ҫуракине хатӗрленесси ҫинчен сӳтсе яврӗҫ. Пуху... тухсан, ҫынсем кино курма кайрӗҫ.

# 11 §. Ă, ĕ уçă сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсем вĕçленни.

Вĕçленĕвĕн тĕслĕхĕсем.

Пĕррелле хисеп.

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ят. | *пулă* | *кĕвĕ* | *хурçă* |
| К. | *пул-л-ăн* | *кĕв-в-ĕн* | *хурç-ăн* |
| П. | *пул-л-а* | *кĕв-в-е* | *хурç-а* |
| Т. | *пулă(пул-л-а)* | *кĕвĕ (кĕв-в-е)* | *хурçă (хурç-а)* |
| Пр. | *пулă-па* | *кĕвĕ-пе* | *хурçă-па* |
| В. | *пулă-ра* | *кĕвĕ-ре* | *хурçă-ра* |
| Тх. | *пулă-ран* | *кĕвĕ-рен* | *хурçă-ран* |

Нумайлă хисеп.

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ят. | *пулăсем* | *кĕвĕ-сем* | *хурçă-сем* |
| К. | *пулă-сен(ĕн)* | *кĕвĕ-сен (ĕн)* | *хурçă-сен (ĕн)* |
| П. | *пулă-сен-е* | *кĕвĕ-сен-е* | *хурçă-сен-е* |
| Т. | *пулă-сем(сене)* | *кĕвĕ-сем (сене)* | *хурçă-сем (сене)* |
| Пр. | *пулă-сем-пе* | *кĕвĕ-сем-пе* | *хурçă-сем-пе* |
| В. | *пулă-сен-че* | *кĕвĕ-сен-че* | *хурçă-сен-че* |
| Тх. | *пулă-сен-чен* | *кĕвĕ-сен-чен* | *хурçă-сен-чен* |

**Ă, ĕ** уçă сасăсемпе пĕтекен аффикссăр япала ячĕсен **ă, ĕ** умĕнче пĕр хупă сасă анчах тăрать пулсан, çав хупă сасă пĕррелле хисепре камăнлăх падежĕнче тата пару-тăву падежĕсенче вăрăмланать; нумайлă хисепре вăрăмланмасть; **ă, ĕ** умĕнче икĕ хупă сасă тăрать пулсан, хупă сасăсем пĕррелле хисепре те вăрăмланмаççĕ.

***68-мĕш задача.*** Вĕçленӳ тĕслĕхĕсене пăхса, çак япала ячĕсене вĕçлесе тухăр:

алă, сăвă, тилĕ, сĕлĕ, хуралçă, пуртă, пĕкĕ, тупă.

***69-мĕш задача.*** Çак статьяна çырса илĕр. **Тулă** сăмах çумне кирлĕ падеж аффиксĕсене лартса пырăр. Камăнлăх тата пару-тăву падежĕсенче л сасса вăрăмлатса çырăр.

## Т у л ă.

Революциччен пирĕн выраˇнсенче тулă... акман. Пирĕн вырăнта тулă пулмасть тесе шухăшланă. Колхозсем организациленĕ хыççăн, тулă... ытларах та ытларах ака пуçларĕç. Тулă питĕ паха тырă. Тулă... çăнăх та кĕрпе те пулать. Тулă... этеме кирлĕ япаласем нумай.

***70-мĕш задача.*** „Кӳлĕ" ятлă статьяна çырса илĕр. **Кӳлĕ** сăмах çумне кирлĕ падеж аффиксĕсене лартса пырăр. Каманлăх тата пару-тăву падежĕсенче л сасса вăрăмлатса çырăр.

## К ӳ л ĕ.

Пирĕн колхоз çĕр чавса пысăк кӳлĕ тунă. Кӳлĕ... тĕрлĕ пулăсем янă. Çуллахи хĕвеллĕ кунсенче кӳлĕ...пулăсем выляни курăнать. Кӳлĕ... тĕпĕ хăйăрлă. Эпир çулла час-часах кӳлĕ... шыва кĕретпĕр. Шăрăх кунсенче кӳлĕ... тухас та килмест. Хĕллехи кунсенче кӳлĕ пăрпа витĕнет. Вара эпир кӳлĕ... пăрĕ çине конькипе ярăнма çӳретпĕр.

***71-мĕш задача.*** 67-мĕш задачăри пекех тăвăр. **Вăрçă** сăмахра **ă** сасă умĕнче икĕ хупă сасă тăраççĕ, çавăнпа вĕсем вăрăмланмаççĕ.

## Вăрçа хирĕç.

Августăн пĕрремĕш кунĕ — вăрçă... хирĕç кун. Çав кун пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем вăрçă... хирĕç митингсем, демонстрацисем туса ирттереççĕ. Вăрçă... сиенĕ нимрен ытла ĕççыннине тивет. Вăрçă... темĕн чухлĕ ĕççынни айăпсăр вилет.

Эпир вăрçасшăн мар, анчах эпир вăрçă... хăрамастпăр. Тăшман пирĕн çине тапăнас пулсан, эпир ăна çапса аркатма яланах хатĕр.

***72-мĕш задача.*** **Пулăçă, кĕтӳçĕ сăмахсем мĕнле вĕçленнине асăрхăр.**

| | | |
|---|---|---|
| Ят. | *пулăçă* | *кĕтӳçĕ* |
| К. | *пулăç-ăн* | *кетӳç-ĕн* |

| | | |
|---|---|---|
| П. | *пулăç-а* | *кĕтӳç-е* |
| Т. | *пулăç-а* | *кĕтӳç-е* |
| Пр. | *пулăçă-па* | *кĕтӳçĕ-пе* |
| В. | *пулăçă-ра* | *кĕтӳçĕ-ре* |
| Тх. | *пулăçă-ран* | *кĕтӳçĕ-рен* |

**Ă, ĕ** уçă сасăсемпе пĕтекен **аффикслă** сăмахсенче **ă, ĕ** умĕнче пĕр хупă сасă анчах тăрать пулсан та, сăмаха вĕçленĕ чухне çав хупă сасă вăрăмланмасть.

## 12 §. И уçă сасăпа пĕтекен япала ячĕсем вĕçленни.

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ят. | **Мĕн ӳсет?** | *пăри* | *тăри* |
| К. | **Мĕнĕн калчи?** | *пăри-н* (*йĕн*) | *тăри-н*(***йĕн***) |
| П. | **Мĕне çумлан?** | *пăри-е* | *тăри-е* |
| Т. | **Мĕн(е) вырнă?** | *пăри*(*е*) | *тăри*(*е*) |
| Пр. | **Мĕнпе савăнатăн?** | *пăри-**пе*** | *тăри-**пе*** |
| В. | **Мĕнре (ăçта) путене?** | *пăри-**ре*** | *тăри-**ре*** |
| Тх. | **Мĕнрен кĕрпе тунă?** | *пăри-**рен*** | *тăри-**рен*** |

**И** уçă сасăпа пĕтекен япала ячĕсем камăнлăх падежĕнче **н** е **йĕн** аффикс йышăнаççĕ, пару-тăву падежĕнче **е** аффикс йышăнаççĕ. Аффикссем пур падежсенче те çемçе пулаççĕ (**и** сасă çемçе уçă сасă пирки).

***73-мĕш задача.*** **Пăри, тăри** сăмахсем мĕнле вĕçленнине пăхса, çак япала ячĕсене вĕçлесе тухăр:

Кĕркури, Варвари, çерçи, çăраççи, шăши, анкарти.

***74-мĕш задача.*** Çак статьяна вуласа тухăр. **Улмуççи** сăмах тĕрлĕ предложенисенче мĕнле падежра тăнине каласа парăр.

### Улмуççи.

**Улмуççи** питĕ усăллă йывăç. **Улмуççие** лайăх пăхмалла. Йывăç çинчи кăмпасене хырса тăмалла. Йывăç тымарĕсем таврашĕнчи çĕре кăпкалатса тăмалла, тислĕк хумалла. Типĕ, уяр çанталăкра **улмуççие** шыв сапса тăмалла. Çапла туса пырсан кашни пысăк **улмуççирен** 12—15 пăт улма илме пулать.

# 13 §. Й сасăпа пĕтекен япала ячĕсем вĕçленни.

| | | |
|---|---|---|
| Ят. | *сарай* | *телей* |
| К. | *сарай-ăн* | *телей-ĕн* |
| П. | *сара-я* | *теле-е* |
| Т. | *сарай(-я)* | *телей(-е)* |
| Пр. | *сарай-па* | *телей-пе* |
| В. | *сарай-ра* | *телей-ре* |
| Тх. | *сарай-ран* | *телей-рен* |

**Й** сасăпа пĕтекен хытă сăмахсем пару-тăву падежĕнче **я** аффикс йышăнаççĕ, çемçе сăмахсем **е** аффикс йышăнаççĕ, **й** саспалли ку падежсенче тухса ӳкет.

***75-мĕш задача.*** **Сарай, телей** япала ячĕсем мĕнле вĕçленнине пăхса çак япала ячĕсене вĕçлесе тухăр:

Урай, сакай, какай, вăй, чей, сăрнай, туй, мăй.

***76-мĕш задача.*** Çак сăвва вуласа тухăр. **Уй** сăмах кашни предложенире мĕнле падежра тăнине, унăн ыйтăвне кăтартса парăр.

## Колхоз уйĕ.

**Уя** тухрăм, ай **уй** куртăм,—  
**уйăн** вĕçĕ-хĕрри те çук.  
**Уйпа** утса ай савăнтăм,  
тулли-сĕлли ай пулнă чух.  
Йăрансăр **уй,** ай куç тулли,  
таçта çити ай сарăлать.  
**Уйра** ылттăн пек сар тулли  
сар тинĕс пек ай хумханать.

***77-мĕш задача.*** **Какай** сăмаха тĕрлĕ падежра **лартса** предложенисем тăвăр.

Тĕслĕх: *Какайпа апат тутлă пулать.*

***78-мĕш задача.*** Çак предложенисенче паллă тунă сăмахсем мĕнле падежра тăнине, мĕнле ыйтупа ыйтăннине кăтартса парăр.

1. Эпĕ **хăмаран шăнкăрч** йăви турăм.

2. **Ачасем** уйра **йĕлтĕрпе** ярăнаççĕ.

3. **Лаша колхоза** пысăк усă парать.

4. **Трактор лашаран** темиçе хут вăйлăрах.

5. Суртлă **тырă** пысăк тухăç парать.

6. **Радио** çĕнĕ хыпарсем пĕлтерет.

7. Пирĕн **çĕршывра ĕççынни** телейлĕ пурăнать.

8. Виççĕмĕш пятилеткăра пирĕн **çĕршыв** пысăк çитĕнӳсем тумалла.

***79-мĕш задача.*** Çак предложенисене çырса илĕр. Паллă тунă япала ячĕсем мĕнле падежра тăнине тата вĕсем предложенире мĕнле член пулса тăнине кăтартса парăр.

Пирĕн çĕршыва коммунистсен **партийĕ** ертсе пырать. **Партире** пирĕн çĕршывăн чи лайăх ывăлĕ-хĕрĕсем тăраççĕ. Чи лайăх ударниксем, стахановецсем **партие** кĕреççĕ. **Партин** вунсаккăрмĕш съезчĕ çĕнĕ устав йышăнчĕ. Пирĕн çĕршыври мĕн пур ĕççынни **партие** юратса хисеплет.

> **Ят падежĕнчи** япала ячĕ предложенире **подлежащее** пулать. Ытти падежсенчи япала ячĕ предложенире **кĕçĕн член** пулать.

***80-мĕш задача.*** Предложенисене вуласа тухăр. Паллă тунă япала ячĕсенчен хăшĕсем ят падежĕнче, хăшĕсем тăву падежĕнче тăраççĕ?

1. Сĕтел çинче **кĕнеке** выртать. Эпĕ Петĕре **кĕнеке** патăм.

2. Çырмана **юр** тулнă. Эпир нӳхрепе **юр** тултартăмăр.

3. Çырмара **шыв** юхать. Эпĕ **шыв** ăсса килтĕм.

> Ят падежĕнче тăракан япала ячĕпе тăву падежĕнче тăракан япала ячĕ час-часах форма енчен пĕр-пĕринпе пĕр пекех пулаççĕ. Вĕсене пĕр-пĕринчен икĕ майпа уйăрма пулать:
>
> 1) сăмах предложенире подлежащее пулсан, вăл ят падежĕнче тăрать; сăмах предложенире кĕçĕн член пулсан, вăл тăву падежĕнче тăрать;

2) ят падежĕнчи сăмах падеж аффиксне йышăнмасть, тăв падежĕнчи сăмах çумне падеж аффиксне лартма пулать. Сăмахран, ,,Сĕтел çинче кĕнеке выртать" предложенире кĕнекене теме май килмест, иккĕмĕш предложенире „Эпĕ Петĕре кĕнекене патăм", теме те май килет.

*81-мĕш задача.* Çак предложенисене **вуласа** тухăр. Паллă тунă япала ячĕсенчен хăшĕ пару падежĕнче, хăшĕ тăву падежĕнче тăнине кăтартса парăр.

1. Эпĕ **ĕнене** утă патăм. Эпĕ кĕтӳре **ĕнене** куртăм.

2. Эпĕ **сĕтеле** кĕнеке хутăм. Эпĕ **сĕтеле** куçарса лартрăм.

3. Эпĕ **шăнкăрча** йăва туса патăм. Эпĕ **шăнкăрча** куртăм.

Пару падежĕнче тăракан япала ячĕ час-часах тăву падежĕнче тăракан япала ячĕпе пĕр формăллă пулать. Ун пек чухне вĕсене пĕр-пĕринчен çапла уйăрма пулать: пару падежĕнче тăракан япала ячĕ падеж аффиксĕсĕр пулма пултараймасть, тăву падежĕнче тăракан япала ячĕн падеж аффиксне кăларса пăрахсан та предложенири шухăш улшăнмасть. Сăмахран, „Эпĕ ĕне утă патăм" теме май килмест; Эпĕ кĕтӳре ĕне куртăм" теме май килет.

## 14 §. Та, те, тан, тен аффикссене çырасси.

*82-мĕш задача.* Çак предложенисене вуласа тухăр. Мĕнле сăмахсенче **ра, ре, ран, рен** çырнине, мĕнле сăмахсенче **та, те, тан, тен** çырнине асăрхăр.

1. Пирĕн атте **колхозран** лаша илчĕ те **вăрмантан** вутă тиесе килчĕ. Аттепе пĕрле **вăрманта** эпĕ те пултăм.

2. Эпĕ **шкулта** вĕренетĕп. Атте **колхозра бригадирта** ĕçлет. Пирĕн **килтен** виççĕн вĕренеççĕ.

3. Пирĕн **пӳртре** илемлĕ картинăсем пур. **Тĕпелте** патефон ларать. **Кĕтесре** радио репродукторĕ пур.

**Л, н, р** сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсем вырăн падежĕнче **та, те,** туху падежĕнче **тан, тен** аффикссене йышăнаççĕ Ытти сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсем çак падежсенче **ра, ре, ран, рен** аффикссене йышăнаççĕ.

***83-мĕш задача.*** Çак предложенисене çырса илĕр. Точкăсем вырăнне ***ра, ре, ран, рен, та, те, тан, тен*** аффикссенчен кирлине кӳртсе çырăр.

1. Пахча... çимĕç нумай. 2. Кĕлет... тырă нумай. 3. Ачасем шкул... вĕренеççĕ. 4. Колхозниксем вăрман... тавăрăнаççĕ. 5. Пичче пасар... тавăрăнчĕ. 6. Çăка вĕрене... çемçерех. 7. Ĕнер... вара çĕр кĕскелме тытăнчĕ. 8. Çӳл... аэроплан сасси илтĕнчĕ. 9. Пирĕн шкул кĕпер... аякра мар. 10. Пирĕн ял Шупашкар... аллă километртра ларать.

***84-мĕш задача.*** Предложенисене вуласа тухăр; вĕсенче **та, те** аффикссемпе пĕр пек уйрăм пĕчĕк сăмахсем пуррине асăрхăр.

1. Вăрман**та** йывăç нумай. Вăрман **та,** хир **те** чĕрĕлчĕç.

2. Ял**та** халь пурăнăç савăк. Ял **та,** хула **та** пĕрпекленсе пыраççĕ.

3. Эпĕ кил**те** час-часах радио итлетĕп. Кил **те** лар ман çумма.

4. Кашни пин**те** вунă çĕр. Ленин пин **те** тăхăрçĕр çирĕм тăваттăмĕш çулта вилнĕ.

**Та, те** падеж аффиксĕсемпе пĕр пек **та, те** пĕчĕк сăмахсем пур, вĕсем предложенире сăмахсене çыхăнтараççĕ е икĕ предложение пĕр-пĕринпе çыхăнтараççĕ.

**Та, те** падеж аффиксĕсене сăмахпа пĕрле çыпăçтарса çыраççĕ, пĕр йышши сăмахсене е предложенисене çыхăнтаракан **та, те** сăмахсене сăмахсенчен уйрăм çыраççĕ.

***85-мĕш задача.*** Çак предложенисене çырса илĕр. Скобкăра панă та, те-сене кирлĕ çĕрте сăмахпа пĕрле çыпăçтарса, кирлĕ çĕрте сăмахран уйрăм çырăр.

Çуркунне çывхарать. Çĕр (те) кĕскелчĕ, хĕвел (те) ăшшине ытларах пара пуçларĕ. Ял (та) хĕрсе çуракине хатĕрленеççĕ. Колхозниксем (те) единоличниксем (те) ака хатĕрĕсене хатĕрлеççĕ. Акă часах юр (та) хускалĕ. Вăрман (та) кайăксен юрри янăра пуçлĕ. Хир (те) тракторсем кĕрлеме тапратĕç. Эпир (те) йĕлтĕрсене, конькисене пуçтарса хурăпăр. Çурхи шыв çине армансем лартмалла выльăпăр.

***86-мĕш задача.*** 82-мĕш задачăри пекех тăвăр.

1. Халь кашни ял (та) тенĕ пекех клуб е вуламалли çурт пур. 2. Ял (та) та, хулара (та) пысăк стройка пырать. 3. Совет Союзĕнчи пур халăх (та) пĕр тан праваллă. 4. Хир (те) халь сухапуç тĕсне (те) кураймăн. 5. Атăл (та) пулă нумай. 6. Шкул çулне çитнисем пур (те) шкул (та) вĕренеççĕ. 7. Çуркунне хир (те), вăрман (та), улăх (та) чĕрĕлеççĕ. 8. Аякра-аякра, пит çӳл (те) аэроплан вĕçет.

## 15 §. Хăш-пĕр хупă сасăсем пĕрпеклении.

***87-мĕш задача.*** Статьяна вуласа тухăр. Паллă тунă сăмахсене каланипе çырни хушшинчи уйрăмлăха асăрхăр.

### Экскурси.

— **Юлташсем!** Паян эпир вăрмана экскурсие **каятпăр,**—терĕ пире учитель. Вăрманти **йывăçсен,** чĕрчунсен хĕллехи пурнăçне сăнама эпир экскурсие кайрăмăр. Вăрманта **пыратпăр,** шакăлтатса **калаçатпăр. Йывăçсем** çулçисене пĕтĕмпех тăкнă. **Йывăçсен** тураттисене пас тытнă. **Чăрăшсем, хырсем** йĕпписене тăкман, ытти **йывăçсен** хушшинче сип-симĕсĕн курăнса лараççĕ. Акă пĕр йывăç çинчен пас тăкăнма пуçларĕ. „Кунта пакша йăви пулмалла“,—терĕ учитель. Йывăç çинелле тинкерсе **пăхатпăр.** Часах пакшине те куртăмăр. Вăл пире йăви патĕнчен аяккалла илĕртсе **каясшăн,** йывăç çинчен йывăç çине сиксе пирĕнтен тарать.

Хăш-пĕр хупă сасăсем, юнашар тăрсан, пĕрпекленеççĕ. **С** сасă **ш** сасăпа юнашар тăнă чухне, **ш** сасă пек илтĕнет, **ç** сасăпа юнашар тăнă чухне **ç** сасă пек илтĕнет. **Т** сасă **п** сасă умĕнче тăнă чухне **п** сасă пек илтĕнет. Çапла юлташсем вырăнне юлташшем, каясшăн вырăнне каяшшăн, йывăçсем вырăнне йывăççем, пыратпăр вырăнне пыраппăр илтĕнет. Анчах çырассине, сăмах пулăвне пăхса, юлташсем, каясшăн, йывăçсем, пыратпăр тесе çырмалла.

***88-мĕш задача.*** Çак сăмахсене каланипе вĕсене çырни хушшинче мĕнле уйрăмлăх пуррине кăтартса парăр:

тантăшсем, пĕлĕшсем, хурăнташсем, карăшсем;
каясшăн, килесшĕн, çырасшăн, пĕлесшĕн, ӳсесшĕн;
вĕренесшĕн, ăмăртасшăн, палăртасшăн, пырасшăн;
чĕкеçсем, çимĕçсем, кавăрçсем, çăлкуçсем;
вулатпăр, çыратпăр, шутлатпăр, вĕренетпĕр, ĕçлетпĕр, ăмăртатпăр.

***89-мĕш задача.*** Çак сăмахсем мĕнле илтĕннине тата вĕсене мĕнле çырмаллине астăвăр.

| Калаççĕ: | Çыраççĕ: |
|---|---|
| юлташшем | юлташсем |
| пĕлĕшшем | пĕлĕшсем |
| хурăнташшем | хурăнташсем |
| тантăшшем | тантăшсем |
| чăрăшшем | чăрăшсем |
| карăшшем | карăшсем |
| акăшшем | акăшсем |
| вулашшăн | вуласшăн |
| çырашшăн | çырасшăн |
| пĕлешшĕн | пĕлесшĕн |
| вĕренешшĕн | вĕренесшĕн |
| ӳсешшĕн | ӳсесшĕн |
| ăмăрташшăн | ăмăртасшăн |
| уташшăн | утасшăн |
| чупашшăн | чупасшăн |

| | |
|---|---|
| каяшшăн | каясшăн |
| килешшĕн | килесшĕн |
| пырашшăн | пырасшăн |
| илешшĕн | илесшĕн |
| чухлашшăн | чухласшăн |
| курашшăн | курасшăн |
| пуççем | пуçсем |
| чĕкеççем | чĕкеçсем |
| çăлкуççем | çăлкуçсем |
| куççем | куçсем |
| каççем | каçсем |
| каççерен | каçсерен |
| хăлаççем | хăлаçсем |
| куçça | куçса |
| авăрçça | авăрçса |
| çыпăçça | çыпăçса |
| пиççе | пиçсе |
| каладаппăр | калаçатпăр |
| килеппĕр | килетпĕр |
| каçаппăр | каçатпăр |
| çӳреппĕр | çӳретпĕр |
| хĕпĕртеппĕр | хĕпĕртетпĕр |
| хавасланаппăр | хавасланатпăр |
| чĕнеппĕр | чĕнетпĕр |

## 16 §. Паллă ячĕсем.

***90-мĕш задача.*** Çак сăвва вуласа тухăр. Сăвăран япала мĕнлине пĕлтерекен сăмахсене япала ячĕсемпе пĕрле çырса илĕр.

Шартлама хĕл иртрĕ кайрĕ.
Çитрĕ ырă çуркунне.
Чĕвĕлти чĕкеç янăратрĕ
хăйĕн савăк юррине.
Тăрă шыв юхать васкавлăн
ешĕл улăхваррипе.
Аслă хир кĕрлет янравлăн
хурçă трактор сассипе.

***91-мěш задача.*** Çак предложенисене вуласа тухăр. Паллă тунă сăмахсем япалан мěнле паллисене пěлтернине каласа парăр.

1. **Хěрлě** хěвел тухрě. 2. **Ялти** çынсем вăранчěç. 3. **Çуркуннехи** çанталăк илемěпе савăнтарать. 4. **Вăрманти** кайăксем **илемлě** юррисене шăрантараççě. 5. **Аслă** хирте **ирхи** ěç вěрет.

> Япала мěнлине пěлтерекен сăмахсене **паллă ячěсем** теççě.
>
> Паллă ячěсем япала мěнлине, ăçтине, хăçанхине пěлтереççě. Вěсен ыйтăвěсем: **мěнле? ăçти? хăçанхи?** (***илемлě** юрă, **вăрманти** кайăк, **ирхи** ěç*)

***92-мěш задача***. Çак статьяна çырса илěр. Паллă ячěсене аялтан йěр туртса паллă тăвăр. Кашни паллă ячě тăрне унăн ыйтăвне лартăр.

## Çуркуннехи вăрман.

Çуркуннехи вăрман хěллехи вăрман пек мар. Йывăçсем симěс, ачаш çулçăсем кăлараççě. Йывăçсен айěнче илемлě чечексем çурăлаççě. Савăнăçлă кайăксен хаваслă юрри кăмăла çěклентерет. Уçă сывлăш кăкăра уçать. Пěтěм чěрчунсем хěллехи ыйхăран вăраннă. Пурте ырă çуркуннене саваççě.

***93-мěш задача.*** Çак статьяра паллă тунă япала ячěсене вěсен умěнче тăракан, вěсем мěнлине пěлтерекен паллă ячěсемпе пěрле çырса илěр. Асăрхăр: япала ячě улшăннă май паллă ячě улшăнать-и?

## Анлă Атăл.

Темиçе пин километр тăршшě юхса выртать анлă **Атăл**. Анлă **Атăлăн** сылтăм çыранě çўлě, сулахай çыранě айлăм. Анлă **Атăлран** пысăкрах шыв Европăра урăх çук. Анлă **Атăлта** темěн тěслě пулă пур. Анлă **Атăл** тăрăх темěн чухлě пароход, баржăсем, кимěсем çўреççě, тавар турттараççě. Анлă **Атăлăн** çыранěсем хěррипе улăхсем сарăлса выртаççě.

> Паллă ячě япала ячěпе çыхăнса тăрать. Паллă ячě **падежсем тăрăх улшăнмасть** (вěçленмест).

***94-мĕш задача.*** Çакăнти япала ячĕсене кăтартнă паллă ячĕсемпе пĕрле илсе вĕçлесе тухăр. Паллă ячĕсем падежсем тăрăх улшăннипе улшăнманнине асăрхăр.

| Ят. | Аслă хир | Ирхи сывлăм |
|---|---|---|
| К. | . . . . . . . . | . . . . . . . . . |
| П. | . . . . . . . . | . . . . . . . . . |

***95-мĕш задача.*** Çак тĕслĕхсене пăхса тухăр. Япала ячĕн хисепĕ улшăннă май ун çумĕнчи паллă ячĕ улшăнать-и?

| | |
|---|---|
| Сарă кайăк. | Сарă кайăксем. |
| Ешĕл калча. | Ешĕл калчасем. |
| Кăтра хурăн. | Кăтра хурăнсем. |
| Тимĕр сенĕк. | Тимĕр сенĕксем. |
| Тутлă улма | Тутлă улмасем. |
| Хĕрлĕ чечек. | Хĕрлĕ чечексем. |
| Тарăн çырма. | Тарăн çырмасем. |
| Хирти тырă. | Хирти тырăсем. |
| Хĕллехи çул. | Хĕллехи çулсем. |

***96-мĕш задача.*** Çак пĕррелле хисепре тăракан сăмахсене нумайлă хисепе куçарăр.

Т ĕ с л ĕ х: *Çурхи çилсем.*

Çурхи çил. Çуллахи кун. Лапсăркка хурăн. Шурă чечек. Сĕм вăрман. Ватă йăмра. Пысăк кӳлĕ. Çирĕп юман. Йăрансăр хир. Çĕнĕ çурт. Тĕрĕс сехет. Уяр кун. Пĕлтĕрхи тырă. Атăлти сулă. Улăхри хăмăш. Çырмари хăва. Çамрăк чăрăш. Тутлă çырла. Яка йĕлтĕр. Вăрăм шыв.

Паллă ячĕсем хисепсем тăрăх та улшăнмаççĕ: *çĕнĕ* пӳрт, *çĕнĕ* пӳртсем.

***97-мĕш задача.*** Точкăсем вырăнне кирлĕ паллă ячĕсене лартса çырса илĕр.

## Çуркунне.

Килчĕ... çуркунне,
килчĕ, ячĕ ăшăтса.
Хĕвел савать тĕнчене,
хĕл ыйхинчен вăратса.
... вăрман чĕрĕлет,
... тумтир тăхăнать.

... хир те ĕшерет,
илемĕпе мухтанать.
... чечексен
... шăрши сарăлать.
Пур çĕрте те кайăксен

... юрри янăрать.
Çӳлте, пĕлĕт айĕнче,
тăри юрри илтĕнет.
... курăк çийĕнче
путек-сурăх сиккелет.

Кирлĕ палла ячĕсем: *тĕттĕм, ырă, тĕрлĕ-тĕрлĕ, лайăх, çемçе, çеçен, ырă, ешĕл.*

***98-мĕш задача.*** 93-мĕш задачăри пекех тăвăр.

## Çырма.

Çырма юхать кĕрлесе,
... ялăн çумĕпе.
Хĕвел, тĕрĕ тĕрлесе,
вылять унăн шывĕпе.

... шывăн ăшĕнче
... пĕлĕт явăнать.
... йăмра тайăлса,
тĕсне пăхса савăнать.

Кирлĕ палла ячĕсем: *кăвак, вата, тăрă, аслă.*

***99-мĕш задача.*** Çак япала ячĕсем çумне май килекен паллă ячĕсене тупăр. Тупнă паллă ячĕсене япала ячĕсемпе пĕрле çырса хурăр.

Çăлтăр. Çил. Çул. Кăвар. Лаша. Шăнкăрч. Автан. Кашкăр. Мулкач. Упа. Курак. Кăвакарчăн. Комбайн. Автомобиль. Трактор. Плуг. Сӳре. Сенĕк.

***100-мĕш задача.*** Çак сăмахсене кӳртсе предложенисем тăвăр

Кăвак пĕлĕт. Вăрманти кайăк. Вăйлă çумăр. Аслă тинĕс. Такăр çул. Шыври пулă. Çуркуннехи ĕç. Ирхи апат. Паянхи хаçат. Юлашки хыпарсем.

Тĕслĕх: *Кăвак пĕлĕтре тăри юрă шăрантарать.*

***101-мĕш задача.*** Çакăнта кăтартнă тĕслĕхсене пăхса, хăвăр пĕр пекрех пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕсем тупăр.

1. Вăйлă, паттăр, хастар, çирĕп.
2. Хăюллă, харсăр, парăнусăр.
3. Илемлĕ,...
4. Хаваслă,...
5. Тирпейлĕ, ...
6. Шанчăклă,...
7. Яштак,...
8. Лайăх,...

***102-мĕш задача.*** Çакăнта кăтартнă паллă ячĕсене хирĕç пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕсем тупса çырăр.

Т ĕ с л ĕ х: *Пысăк шыв — пĕчĕк шыв.*

| | | |
|---|---|---|
| Пысăк шыв. | Çамрăк лаша. | Тӳрĕ çул. |
| Вăйлă çил. | Пысăк ĕне. | Анлă улăх. |
| Уяр кун. | Çăмлă сурăх. | Çĕнĕ пӳрт. |
| Ăшă çанталăк. | Аратлă сысна. | Çывăхри ял. |
| Тарăн кӳлĕ. | Пĕчĕк путек. | Тăрă шыв. |
| Ансăр урам. | Пысăк пахча. | Шывлă çырма. |

***103-мĕш задача.*** Сулахай енчи паллă тунă сăмахсене çырнине сылтăм енчи паллă тунă сăмахсене çырнипе танлаштарăр.

| | |
|---|---|
| *Анлă* кӳлĕ | *Пулăллă* кӳлĕ |
| *Çăмлă* сурăх | *Çуллă* сурăх |
| *Пĕлĕтлĕ* кун | *Тĕтреллĕ* кун |
| *Аслă* пионер | *Пултаруллă* пионер |
| *Тирпейлĕ* çурт | *Йĕркеллĕ* çурт |
| *Хастарлă* çын | *Хăюллă* çын |
| *Пĕлĕтлĕ* кун | *Тĕтреллĕ* кун |
| *Илемлĕ* йывăç | *Çулçăллă* йывăç. |
| *Хаваслă* ĕç | *Ăмăртуллă* ĕç. |

**Лă, лĕ** аффикс хушăннипе пулнă паллă ячĕсенче, сăмах тĕпĕ уçă сасăпа пĕтет пулсан, **ллă** е **ллĕ** çырмалла.

***104-мĕш задача.*** Çак предложенисене çырса илĕр. Точкăсем вырăнне ***лă, лĕ, ллă, ллĕ*** аффикссенчен кирлине кӳртсе çырăр.

1. Пирĕн хавас... çĕршывра пысăк стройка пырать. 2. Рабочисем, колхозниксем савăнăç..., телей... пурăнăçпа пурăнаççĕ. 3. Кашни заводра, колхозра ăнлану... дисциплина çирĕпленсе пырать. 4. Пирĕн хăват..., хастар..., çĕнтерӳ... Хĕрлĕ Çар Совет çĕршывĕн чиккисене çирĕп сыхлать.

***105-мĕш задача.*** Çак сăвва çырса илĕр. Точкăсем вырăнне ***лă, лĕ, ллă, ллĕ*** аффикссенчен кирлине кӳртсе çырăр.

Ем-ешĕл çеç вăрман,
чечек... улăх.
Шăпчăк юрри янăрать
кунта хăюллăн.
Ман çамрăклăх çав улăх пек
чечек...,
ман çамрăклăх çав юрă пек
хăю...

## 17 §. Сăпатлă местоименисем.

***106-мĕш задача.*** Сулахай енчипе сылтăм енчи пĕчĕк калавсене танлаштарса пăхăр. Вĕсем хушшинче мĕнле уйрăмлăх пур? Сылтăм енче *Верук, Верука, ачасем* вырăнне мĕнле сăмахсем тăраççĕ.

1. Пĕчĕк **Верук** урампа пынă. — Пĕчĕк Верук урампа пынă.
2. Сасартăк **Верука** йытă хăвалама пуçланă. — Сасартăк **ăна** йытă хăвалама пуçланă.
3. **Верук** йытăран тарма тытăннă. — **Вăл** йытăран тарма тытăннă.
4. **Верук** йытăран тарнине ачасем курнă. — **Верук** йытăран тарнине ачасем курнă.
5. **Ачасем** йытта хăваласа янă. — **Вĕсем** йытта хăваласа янă.

Предложенире япала ячĕсем вырăнне **эпĕ, эсĕ, вăл, эпир, эсир, вĕсем** йышши сăмахсем пулма пултараççĕ. Вĕсене **местоименисем** теççĕ.

*Эпĕ, эпир* — 1-мĕш сăпат местоименийĕсем.
*Эсĕ, эсир* — 2-мĕш сăпат местоименийĕсем.
*Вăл, вĕсем* — 3-мĕш сăпат местоименийĕсем.

1-мĕш сăпат — кам калаçаканни.
2-мĕш сăпат — кама калатпăр, çавă.
3-мĕш сăпат — кам е мĕн çинчен калатпăр, çавă.

***107-мĕш задача.*** Çак предложенисене çырса илĕр. Местоименисене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

1. Эпӗ Павӑлран аслӑрах. 2. Эпӗ вунӑ ҫулта, вӑл саккӑрта анчах.

2. Атте вӑрмантан таврӑнчӗ. Вӑл мана: „Эсӗ лашана колхоза илсе кайса пар-ха“,—терӗ.

3. Эпир виҫҫӗн, эсир иккӗн: пурӗ пӗрле пиллӗкӗн.

4. Павӑл килте ҫук, вӑл кинона кайнӑ.

## Сӑпатлӑ местоименисем вӗҫленни.

### Пӗрреллӗ хисеп.

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ят. **Кам** пионер? | *Эпӗ* | *Эсӗ* | *вӑл* |
| К. **Камӑн** галстук пур? | *Ман(ӑн)* | *сан(ӑн)* | *ун(-ӑн)* |
| П. **Кама** значок кирлӗ? | *Ман-а* | *сан-а* | *ӑн-а* |
| Т. Вожатый **кама** чӗнчӗ? | *ман-а* | *сан-а* | *ӑн-а* |
| Пр. **Кампа** лагере каятпӑр? | *ман-па* | *сан-па* | *ун-па* |
| В. Ялав **камра**? | *ман-ра* | *сан-ра* | *ун-ра* |
| Тх. **Камран** кӗнеке илнӗ? | *ман-ран* | *сан-ран* | *ун-ран.* |

### Нумайлӑ хисеп.

| | | |
|---|---|---|
| Ят. *Эпир* | *Эсир* | *вӗсем* |
| К. *пир-ӗн* | *сир-ӗн* | *вӗ-сен-(ӗн)* |
| П. *пир-е* | *сир-е* | *вӗ-сен-е* |
| Т. *пир-е* | *сир-е* | *вӗ-сен-е* |
| Пр. *пирӗн-пе* | *сирӗн-пе* | *вӗ-сем-пе* |
| В. *пир-те, пирӗн-те* | *сир-те, сирӗн-те* | *вӗ-сен-че* |
| Тх. *Пир-тен, пирӗн-тен* | *сир-тен, сирӗн-тен* | *вӗ-сен-чен* |

Сӑпатлӑ местоименисем падежсем тӑрӑх улшӑннӑ чухне япала ячӗсем йышӑнакан аффикссенех йышӑнаҫҫӗ.

Виҫҫӗмӗш сӑпатӑн пӗрреллӗ хисепри пару-тӑву падежӗнче **уна** вырӑнне **ӑна** ҫыраҫҫӗ.

***108-мӗш задача.*** Ҫак сӑвва ҫырса илӗр. Сӑпатлӑ местоименисене аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр. Сӑпатлӑ местоименисен вӗҫленӗвӗн тӗслӗхӗсене пӑхса, сӑвӑри местоименисем кашни мӗнле падежра тӑнине кӑтартса парӑр.

## Пограничник.

Сивĕ хĕл. Тĕттĕм каç. Сас-чĕв çук таврара.
Пограничник тăрать хуралта.
Унăн витĕр кураççĕ куçĕсем тăшмана,
вăл кĕртмест çĕршыва никама.
Каçăн-ирĕн тăрать ик тĕнче хушшинче,
вăл сыхлать хăй тăван çĕршывне.
Сталин панă ăна çак таса тивĕçе,
халăх шаннă хăйĕн ывăлне.

***109-мĕш задача.*** Çак предложенисенче местоименисем мĕнле хисеприне, мĕнле сăпатрине каласа парăр.

1. Манăн пичче трактористра ĕçлет. Вăл питĕ тĕплĕ ĕçлет. Унпа ĕçлекенсем ăна питĕ мухтаççĕ. Вĕсем унран ударлă ĕçлеме вĕренеççĕ.

2. Манăн аппа колхозра ĕнесене пăхать. Вăл ударница. Унăн ятне хĕрлĕ хăма çине çырнă.

***110-мĕш задача.*** Çак предложенисенчи местоименисен хисепне, сăпатне, падежне кăтартса парăр.

1. **Пирĕн** килте радио пур, **сирĕн** пур-и?

2. **Эсĕ ман** пата пыр-ха, **мана санпа** пĕрле урока хатĕрленме çăмăл.

3. **Эпĕ сире** вулама кĕнеке панăччĕ, **эсир ăна** илсе килтĕр-и?

4. **Эсир** хăяр вăррисене шăтарса пăхман, **вĕсене** акиччен шăтарса пăхас пулать.

***111-мĕш задача.*** а) ***Эпĕ, эсĕ, вăл*** местоименисене кӳртсе предложенисем тăвăр. б) ***Эпир, эсир, вĕсем*** местоименисене кӳртсе предложенисем тăвăр.

***112-мĕш задача.*** Точкăсем вырăнне ***вăл*** местоимение кирлĕ падежра лартса çырăр.

## Я с л и.

Анна аппа заводра ĕçлет. Завода... 8 сехетре каять. ... пĕчĕк хĕрача пур. Кашни ир, ĕçе кайнă чухне, Анна

аппа хăйпе пĕрле хĕрне илет те ... яслине кўртсе хăварать. Яслире... пăхаççĕ, апат çитереççĕ. Ĕçрен тухсан, Анна аппа, яслине кĕрсе, хĕрне илсе тухать те... пĕрле килне таврăнать.

***113-мĕш задача.*** Çак предложенисенчи местоимене пĕрремĕш сăпатран иккĕмĕш сăпата куçарса, предложенисем тăвăр.

Тĕслĕх: *Эсĕ вунпĕр çулта. Санăн аçу, аннŭ, пичу, инкŭ пур.*

Эпĕ вунпĕр çулта. Манăн атте, анне, пичче, инке пур. Эпĕ сакăр çул тултарсан, мана шкула ячĕç. Мана ăсатма шкула анне пычĕ. Манпа пĕрле вăл шкул заведующийĕ патне кĕчĕ. Мана шкула илчĕç. Çав çулта манпа пĕрле 39 ача вĕренме кĕчĕç. Эпĕ ун чухне вулама, çырма пĕлместĕм. Халь ĕнтĕ эпĕ вулама та, çырма та, шутлама та пĕлетĕп. Историпе географине те пĕлетĕп. Эпĕ лайăх вĕренетĕп. Мана шкулта отличник теççĕ.

## 18 §. Глаголсем.

***114-мĕш задача.*** Çак сăвва вуласа тухăр. Паллă тунă сăмахсене çырса илĕр.

### Çурхи юрă.

Кайăксем çунат çапса **юрлаççĕ,**
сывлăмпала сассисене **уçаççĕ.**
Ту хыçĕнчен çурхи хĕвел **тухать.**
Çĕршывăмăр хаваслăхпа **тулать.**
Улмуççисем кĕрнеклĕн **хумханаççĕ.**
Чечекĕсем çеçкисене **сараççĕ.**
Çĕре **сырса илет** им-пыл шăрши,
хаваслăн та тулли **сывлать** çĕршыв.

Тўпе урлă самолетсем **каçаççĕ**,
çўл тўпене шăп çурмаран **касаççĕ**.
Вĕсен çинче ылттăн хĕвел **кулать.**
Çĕршывăмăр хаваслăхпа **тулать.**

Çак сăвăри паллă тунă сăмахсем япала мĕн тунине пĕлтереççĕ?

Япала мĕн тунине е выртнине-тăнине пĕлтерекен сăмаха **глагол** теççĕ.

**Юрлаççĕ, хумханаççĕ, сывлать, кулать** сăмахсем — **глаголсем**.

***115-мĕш задача.*** Çак сăвва çырса илĕр. Глаголсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

Мотор пекех тапать чĕрем,
хавасланать çак ирĕкшĕн.
Пирĕншĕн ешерет çерем.
Çут шыв та юхать пирĕншĕн.

Йĕри-тавра пăхатăп эп —
чечекленет çĕршывăмăр.
Хавас юрра юрлатăп эп.
Сывă пултăр çулпуçăмăр!

***116-мĕш задача.*** Калава вуласа тухăр. Унтан çырса илĕр. Глаголсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

## Çил-тăман.

Мана службăна янă вырăналла çитсе пыратпăр. Таврара пушă хирсем сарăлса выртаççĕ. Мĕн пурĕ пурте шурă юрпа витĕннĕ. Хресченсен çуни йĕрри тăрăх кŷме кăштăртатса шăвать.

Таçта аякра пĕр шурă пĕлĕт татăкĕ курăнать. Малтан эпĕ ăна пĕр-пĕр пĕччен сăрт е тĕмеске пулĕ терĕм. Ямшăк мана ку пĕлĕт çил-тăман тухасса палăртни çинчен пĕлтерчĕ.

Ямшăк чуптарма пуçларĕ. Учĕсем маттурăн юртаççĕ. Çил вăйланчĕ. Вĕтĕ юр вĕтĕртетме тытăнчĕ. Унтан сасартăк çерçи пуçĕ пек чăмаккасем лаплатма пуçларĕç. Çилĕ улать. Тăман çавăрттарса тухрĕ. Нимĕн те курăнмасть.

## 19 §. Глаголсем сăпатланни.

***117-мĕш задача.*** Статьяна çырса илĕр. Точкăсем вырăнне кирлĕ сăмахсем хушăр.

## Красноармеец, тракторист тата тимĕрçĕ.

(Кам мĕнле калать).

Красноармеец тракториста: „Эпĕ ССР Союзне..., эсĕ тракторпа..., вăл (тимĕрçĕ) тимĕр...“ Тимĕрçĕ красноармееца: „Эпĕ тимĕр..., Эсĕ Совет Союзне..., вăл (тракторист) тракторпа...“

Тракторист тимĕрçе: „Эпĕ тракторпа..., эсĕ тимĕр..., вăл (красноармеец) Совет Союзне...“

Кирлĕ сăмахсем:

| | | |
|---|---|---|
| *сыхлатăп* | *шаккатăп* | *ĕçлетĕп* |
| *сыхлатăн* | *шаккатăн* | *ĕçлетĕн* |
| *сыхлать* | *шаккать* | *ĕçлет* |

***118-мĕш задача.*** 117-мĕш задачăна тепĕр хут çырса илĕр; ***эпĕ, эсĕ, вăл*** местоименисене нумайлă хисепре лартса, точкăсем вырăнне çак глаголсене кўртсе пырăр.

| | | |
|---|---|---|
| *сыхлатпăр* | *шаккатпăр* | *ĕçлетпĕр* |
| *сыхлатăр* | *шаккатăр* | *ĕçлетĕр* |
| *сыхлаççĕ* | *шаккаççĕ* | *ĕçлеççĕ* |

Глагол пĕрремĕш, иккĕмĕш тата виççĕмĕш сăпатри местоименипе пĕрле тăрать пулсан, унăн вĕçĕ улшăнса пырать.

Глагол сăпат тăрăх улшăннине **сăпатланни** теççĕ.

## 20 §. Глаголăн вăхăчĕсем.

Эпĕ çыру *çыратăп*.
Эпĕ çыру *çыртăм*.
Эпĕ çыру *çырăп*.

Эпĕ *вĕренетĕп*
Эпĕ *вĕрентĕм*.
Эпĕ *вĕренĕп*.

Эпĕ кĕнеке *вулатăп*.
*Эпĕ кĕнеке вуларăм.*
Эпĕ кĕнеке *вулăп*.

Эпĕ шкула *çўретĕп*. Эпĕ шкула *çўрерĕм*. Эпĕ шкула *çўрĕп*.

Глаголсем **хальхи** вăхăта, **иртнĕ** вăхăта, **пулас** вăхăта пĕлтерме пултараççĕ.

Глаголăн хальхи вăхăт форми ĕç халь, калаçнă вăхăтра пулнине пĕлтерет: *çыратăп, вулатăп, вĕренетĕп, ĕçлетĕп.*

Глаголăн иртнĕ вăхăт форми пулса иртнĕ ĕçе пĕлтерет: *çыртăм, çырнă, вуларăм, вуланă, вĕрентĕм, вĕреннĕ.*

Пулас вăхăт форми ĕç калаçнă вăхăтран кайран пуласса пĕлтерет: çырăп, вулăп, вĕренĕп, çӳрĕп.

***119-мĕш задача.*** Çак глаголсене хальхи вăхăтра лартса çырăр.

Тĕслĕх: *Канатăп, ĕмĕтленетĕп.*

Кан... Выля... Пыр... Çĕкле... Кĕр... Йĕркеле... Ĕмĕтлен... Шутла... Ăмăрт...

***120-мĕш задача.*** Çак глаголсене иртнĕ вăхăтра лартса çырăр.

Тĕслĕх: *Ĕçлерĕм (ĕçленĕ), вăйлăлантăм (вăйлăланнă).*

Ĕçле... Вĕрен... Сыхла... Юрла... Кала... Кур... Кул... Савăн... Хаваслан... Вăйлăлан...

***121-мĕш задача.*** Çак глаголсене пулас вăхăтра лартса çырăр.

Тĕслĕх: *Çитĕнĕп, пуçтарăп.*

Çитĕн... Ӳс... Çыр... Хастарлан... Кӳл... Тăвар... Турттар... Çут... Çур... Пуçтар... Виç...

***122-мĕш задача.*** Çак предложенисенчи иртнĕ вăхăтри глаголсене хальхи вăхăта куçарăр.

Тĕслĕх: *Ванюк шкулта вĕренет.*

Ванюк шкулта вĕреннĕ. Вăл пур предметсемпе те лайăх вĕреннĕ. Ванюк уроксене йĕркеллĕ хатĕрленсе пынă. Учитель ыйтсан, вăл яланах тĕрĕс ответ панă. Ванюк хăйĕн юлташĕсене те вĕренӳре пулăшса пынă.

***123-мĕш задача.*** Çак сăвăри хальхи вăхăтри глаголсене пулас вăхăта куçарса пырăр.

Тĕслĕх: *Шавлĕ, кашлĕ сĕм вăрман,*
*вĕçĕ-хĕрри курăнме.*

## Вăрманта.

Шавлать, кашлать сĕм вăрман,
вĕçĕ-хĕрри курăнмасть.
Кутсăр-пуçсăр çил тухсан,
чарăнассăн туйăнмасть.
Тапхăр-тапхăр çил килет,
пăлтăр-палтăр çавăрса.
Тĕттĕм вăрман ӳхĕрет,
çĕре çитех авăнса.
Хура пĕлĕт пĕрмаях,
шăвать вăрман тăрринче.
Ярать çиçĕм çĕр çурсах
хура пĕлĕт хушшинче.

Аçа çапать, шартлатать,
пĕтĕм тĕнче кисренет.
Çумăр çырма пек юхать,
лупашкасенче кĕрлет.

***124-мĕш задача.*** Çак сăвăри палла тунă глаголсен вăхăтне кăтартса парăр.

## Амăшĕ хĕрне ăсатрĕ.

Шурăмпуçĕ çĕкленсессĕн
хĕрлĕ юн тĕспе,
амăшĕ хĕрне **ăсатрĕ**
вăрçă хирĕпе.
Икĕ ывăл **пулнă** унăн,
**пулнă**... халĕ çук:
вĕсем **ӳкнĕ** Альказаршăн
харсăр вăрçнă чух.

Çулăмпа **çунать** Испания,
**Çăвăнать** юнпа.
Лăпланса ларма çук канăç,
унашкал кун мар.

Çавăнпа та шуçăм витĕр,
авă, ирхине,
амăшĕ хĕрне **ăсатрĕ**
хĕрлисем патне.

***125-мĕш задача.*** Паллă тунă глаголсен вăхăчĕсене кăтартса парăр.

## Сăпка юрри.

Пĕчĕк ывăлăмçăм, çывăр,
тутлă тĕлĕк кур.
**Ўсĕн** эс паттăр та сывă,
**çитĕнĕн** маттур.
Емĕтсем таçтах **вĕçеççĕ**,
питĕ инçене.
**Пулăн** эс, ачам, вĕçевçĕ,
пулăн инженер.
**Кайăн** тинĕс-океанăн
пăрĕсем урлах.
Çавăнпа аннӳ халь санăн
савăнса **юрлать**.

**Çитĕн** эс сив тинĕс урлă
çурçĕрĕн вĕçне.
Сан çинчен, пин юрă **юрлĕç**,
**ырлĕç** сан ĕçне.

## 21 §. Глаголсем хальхи вăхăтра сăпатланни.

Пĕрреллĕ хисеп.

| | | |
|---|---|---|
| 1-мĕш сăпат. | *Эпĕ кур-ат-ăп,* | *илт-ет-ĕп.* |
| 2-мĕш сăпат. | *Эсĕ кур-ат-ăн,* | *илт-ет-ĕн.* |
| 3-мĕш сăпат. | *Вăл кур-ать,* | *илт-ет.* |
| 1-мĕш сăпат. | *Эпĕ шутла-т-ăп,* | *ĕçле-т-ĕп.* |
| 2-мĕш сăпат. | *Эсĕ шутла-т-ăн,* | *ĕçле-т-ĕн.* |
| 3-мĕш сăпат. | *Вăл шутла-ть,* | *ĕçле-т.* |

Нумайлă хисеп.

| | | |
|---|---|---|
| 1-мĕш сăпат. | *Эпир кур-ат-пăр,* | *илт-ет-пĕр.* |
| 2-мĕш сăпат. | *Эсир кур-ат-ăр,* | *илт-ет-ĕр.* |
| 3-мĕш сăпат. | *Вĕсем кур-аç-çĕ,* | *илт-еç-çĕ.* |

| | | |
|---|---|---|
| 1-мӗш сӑпат. | *Эпир-шутла-т-пӑр* | *ӗҫле-т-пӗр.* |
| 2-мӗш сӑпат. | *Эсир шутла-т-ӑр* | *ӗҫле-т-ӗр.* |
| 3-мӗш сӑпат. | *Вӗсем шутла-ҫ-ҫӗ* | *ӗҫле-ҫ-ҫӗ.* |

## Глаголӑн хальхи вӑхӑт аффиксӗсем ҫакӑн пек.

| | Пӗрреллӗ хисеп. | Нумайлӑ хисеп. |
|---|---|---|
| 1-мӗш сӑпатра: | *атӑп, етӗп, тӑп, тӗп;* | *атпӑр, етпӗр, тпӑр, тпӗр.* |
| 2-мӗш сӑпатра: | *атӑн, етӗн, тӑн, тӗн;* | *атӑр, етӗр, тӑр, тӗр.* |
| 3-мӗш сӑпатра: | *ать, еть, ть, т.* | *аҫҫӗ, еҫҫӗ, ҫҫӗ.* |

***126-мӗш задача.*** Сӑвӑри хальхи вӑхӑтри глаголсене ҫырса илӗр. Вӗсен сӑпатне кӑтартса парӑр.

### П а х ч а.

Шарлатса юхать ҫырма,
хӗрринче ун хурама,
аякра кӑтра вӑрман.
Лапӑра ача-пӑча
ӳстерет пӗчӗк пахча.
Пит хитре: йӗркен-йӗркен
чавса тухнӑ йӑрансем.
Ав унта йӗркен-йӗркен
ҫитӗнеҫҫӗ ҫимӗҫсем.
Шав ӗҫлеҫҫӗ ачасем.
Ӳркенмеҫҫӗ ҫамрӑксем.

***127-мӗш задача.*** Ҫак глаголсене хальхи вӑхӑтра сӑпатласа тухӑр.

Эпӗ хаваслanатӑп. Эпӗ хӗпӗртетӗп. Эпӗ ӗмӗтленетӗп. Эпӗ васкатӑп.

***128-мӗш задача.*** Ҫакӑнти паллӑ тунӑ хальхи вӑхӑтри глаголсене мӗнле ҫырмаллине асӑрхӑр.

Куллен **вӑйланать, ҫитӗнет, ҫирӗпленет** пирӗн тӑван ҫӗршыв. Халиччен ҫын пурӑнман вырӑнсенче халь ҫӗнӗ

заводсем **лараççĕ**, çĕнĕ хуласем **лараççĕ**, электричество çути **йăлтăртататать.** Эпир, пĕтĕмĕшпе илсен, социализма туса çитертĕмĕр. Пирĕн çĕршывра темĕн чухлĕ çĕнĕ заводсемпе фабрикăсем **ĕçлеççĕ**, çĕнĕ ялсем, хуласем **чечекленеççĕ**. Ĕççыннин пурăнăçĕ çулсерен лайăхланса **пырать**. Пятилетка планне эпир ытлашшипех пурнăçласа **пыратпăр**.

Глагол хытă сăмах пулсан, ун вĕçĕнче виççĕмĕш сăпатра пĕрреллĕ хисепре **ать** çырмалла, нумайлă хисепре **аççĕ** çырмалла: *чупать, чупаççĕ.*

Глагол çемçе сăмах пулсан, ун вĕçĕнче виççĕмĕш сăпатра пĕрреллĕ хисепре **ет** çырмалла, нумайлă хисепре **еççĕ** çырмалла: *вĕçет, вĕçеççĕ.*

***129-мĕш задача.*** Сăвва çырса илĕр. Çырса пĕтермен глаголсене çырса пĕтерсе пырăр.

Вĕçевçĕсем çурçĕрелле васка...
Сад пахчинче ĕçле... аслă пахчаçă.
Хăй пахчинчи кашни, пур йывăçах
çитĕнтер... çак тимлĕхлĕ хуçа.

Кайăкĕсем пахча тули юрла...
Юррипеле пахчаçăна ырла...
Çак çĕр çинчи чи хаклă тăван ят
юрăсенче хĕвел пек шăран...

***130-мĕш задача.*** 129-мĕш задачăри пекех тăвăр.

## Хĕрӳллĕ ĕç.

Ĕçле..., шавла... вĕр-çĕн станоксем,
металл шăрат... гигант-домнăсем.
Васка..., чуп... вăрăм поездсем,
тем тĕрлĕ тавар турттар... вĕсем.
Кĕрле... хурçă трактор колхоз хирĕнче,
шавла... молотилка пуян итемре.
Комбайнĕ хир тăрăх хуçа пек çӳре...
Васка... ĕçлĕ халăх хĕрӳллĕ ĕçре.

# 22 §. Глаголсем пулас вăхăтра сăпатланни.

*131-мĕш задача.* Çакăнти паллă тунă глаголсем мĕнле вăхăта пĕлтернине, мĕнле аффикссем йышăннине каласа парăр.



Виçĕ пионер хула урамĕ тăрăх пыраççĕ. Вĕсенчен пĕри калать: „Эпĕ вĕçме юрататăп, эпĕ летчик **пулăп. Ӳсĕп, вĕренĕп**, самолет çинче **вĕçĕп**",—тет.

Иккĕмĕшĕ калать: „Эпĕ инженер **пулăп.** Çĕнĕ хула **тăвăп,** çутă вокзал **тăвăп,** шыв урлă кĕперсем **хывăп**",—тет.

Виççĕмĕшĕ калать: „Эпĕ художник **пулăп.** Çав çутă вокзала картина çине **ӳкерĕп**. Клуба картинăсем туса **çакăп**",—тет. Виççĕшĕ те вĕсем тăван çĕршывшăн усăллă çынсем пулма ĕмĕтленеççĕ.

*Пулăп, вĕçĕп, вĕренĕп, ӳсĕп* — пулас вăхăтри глаголсем.

Глаголсем пулас вăхăтра çапла сăпатланаççĕ:

Пĕрреллĕ хисеп.

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1-мĕш сăпат. | *Эпĕ çыр-ăп,* | *вул-ăп,* | *ӳс-ĕп.* |
| 2-мĕш сăпат. | *Эсĕ çыр-ăн,* | *вул-ăн,* | *ӳс-ĕн.* |
| 3-мĕш сăпат. | *Вăл çыр-ĕ,* | *вул-ĕ,* | *ӳс-ĕ.* |

Нумайлă хисеп.

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1-мĕш сăпат. | *Эпир çыр-ăпăр,* | *вул-ăпăр,* | *ӳс-ĕпĕр.* |
| 2-мĕш сăпат. | *Эсир çыр-ăр,* | *вул-ăр,* | *ӳс-ĕр.* |
| 3-мĕш сăпат. | *Вĕсем çыр-ĕç,* | *вул-ĕç,* | *ӳс-ĕç.* |

## Пулас вăхăт аффиксĕсем.

| | Пĕрреллĕ хисеп. | Нумайлă хисеп. |
|---|---|---|
| 1-мĕш сăпатра | *ăп, ĕп,* | *ăпăр, ĕпĕр.* |
| 2-мĕш сăпатра | *ăн, ĕн,* | *ăр, ĕр.* |
| 3-мĕш сăпатра | *ĕ.* | *ĕç.* |

***132-мĕш задача.*** Тĕслĕхе пăхса, çак глаголсене пулас вăхăтра сăпатласа тухăр.

Эпĕ юрлăп. Эпĕ ĕçлĕп. Эпĕ çитĕнĕп. Эпĕ çĕршыва сыхлăп.

***133-мĕш задача.*** Паллă тунă глаголсен вăхăтне, хисепне, сăпатне кăтартса парăр.

Ыран пирĕн шкулта вечер пулать. Эпĕ вечерта хам çырнă сăвăсене **вулăп**, эсĕ юрăсем **юрлăн**, Коля кулăшла калавсем вуласа **парĕ.** Пурте эпир хамăр çитĕнӳсене **кăтартăпăр.** Хамăр та **савăнăпăр**, çынсем те **савăнĕç**.

***134-мĕш задача.*** Çак глаголсене пулас вăхăтра пĕрреллĕ хисепре те, нумайлă хисепре те сăпатласа тухăр.

Эпĕ поездсене ертсе çӳрĕп. Эпĕ учитель пулăп. Эпĕ дирижабльпе вĕçĕп. Эпĕ командир пулма вĕренĕп.

## 23 §. Иртнĕ вăхăт.

***135-мĕш задача.*** Çакăнта паллă тунă глаголсем мĕнле вăхăта пĕлтереççĕ?

Октябрьти Социализмла Аслă революци 1917-мĕш çулта **пулчĕ.**

Партин вунсаккăрмĕш съезчĕ 1939-мĕш çулта мартăн вуннăмĕшĕнче **пуçланчĕ**. Съезд партин çĕнĕ уставне **йышăнчĕ**, партин Тĕп Комитетне **суйларĕ**.

Октябрьти Социализмла Аслă революци 1917-мĕш çулта **пулнă.**

Партин вунсаккăрмĕш съезчĕ 1939-мĕш çулта мартăн вуннăмĕшĕнче **пуçланнă.** Съезд партин çĕнĕ уставне **йышăннă,** партин Тĕп Комитетне **суйланă.**

Чăваш чĕлхинче иртнĕ вăхăтăн икĕ форма пур: **курса иртнĕ форма, курмасăр иртнĕ форма.**

1. Калаканни пулса иртнĕ ĕçе хăй курнă пек калать пулсан, глаголсем курса иртнĕ формăра пулаççĕ: *пуçланчĕ, пулчĕ, суйларĕ.*

2. Калаканни пулса иртнĕ ĕçе хăй курман пек калать пулсан, глаголсем курмасăр иртнĕ формăра пулаççĕ: *пуçланнă, пулнă, суйланă.*

***136-мĕш задача.*** Çак тĕслĕхсенче скобкăра лартнă икĕ формăран хăшне каламалла?

а) Эпĕ кăçал çулла пионерсен лагерĕнче *(пулнă, пултăм).* Унта пире питĕ аван *(пăхрĕç, пăхнă).* Кунне тăвата хутчен апат *(çитеретчĕç, çитернĕ).* Вăйăсем выляма, юрăсем юрлама *(вĕрентнĕ, вĕрентрĕç).*

б) Майăн пĕрремĕшне уявласси 1889-мĕш çултан пуçланса (кайрĕ, кайнă). Гарри Айзман Америкăра шкулта (вĕренчĕ, вĕреннĕ). Кунта вăл пионер отрячĕ (тунă, турĕ). Çав отряда шкулта вĕренекен рабочи ачисем пурте (кĕчĕç, кĕнĕ). Гарри пур ачасене те пĕтĕм тĕнчере совет влаçĕ тăвассишĕн кĕрешĕве (чĕнчĕ, чĕннĕ).

## Курса иртнĕ форма сăпатланни.

### Пĕррелле хисеп.

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1-мĕш сăпат. | Эпĕ | *вула-рăм* | *ĕçле-рĕм.* |
| 2-мĕш сăпат. | Эсĕ | *вула-рăн* | *ĕçле-рĕн.* |
| 3-мĕш сăпат. | Вăл | *вула-рĕ* | *ĕçле-рĕ.* |
| 1-мĕш сăпат. | Эпĕ | *çыр-тăм* | *пĕл-тĕм.* |
| 2-мĕш сăпат. | Эсĕ | *çыр-тăн* | *пĕл-тĕн.* |
| 3-мĕш сăпат. | Вăл | *çыр-чĕ* | *пĕл-чĕ.* |

Нумайлă хисеп.

| | | |
|---|---|---|
| 1-мĕш сăпат. | Эпир *вула-рăмăр* | *ĕçле-рĕмĕр.* |
| 2-мĕш сăпат. | Эсир *вула-рăр* | *ĕçле-рĕр.* |
| 3-мĕш сăпат. | Вĕсем *вула-рĕç* | *ĕçле-рĕç.* |
| 1-мĕш сăпат. | Эпир *çыр-тăмăр* | *пĕл-тĕмĕр.* |
| 2-мĕш сăпат. | Эсир *çыр-тăр* | *пĕл-тĕр.* |
| 3-мĕш сăпат. | Вĕсем *çыр-чĕç* | *пĕл-чĕç.* |

Курса иртнĕ формăн аффиксĕсем.

| Пĕрреллĕ хисеп. | Нумайлă хисеп. |
|---|---|
| 1-мĕш сăпатра: *рăм, рĕм, тăм, тĕм;* | *рăмăр, рĕмĕр, тăмăр, тĕмĕр.* |
| 2-мĕш сăпатра: *рăн, рĕн, тăн, тĕн;* | *рăр, рĕр, тăр, тĕр.* |
| 3-мĕш сăпатра: *рĕ, чĕ;* | *рĕç, чĕç.* |

Глагол тĕпĕ **р, л, н** сасăпа пĕтет пулсан, аффиксра **р** вырăнне **т** пулать: *çыр-тăм, ĕнер-тĕм, пул-тăм, кил-тĕм, кан-тăм, чĕн-тĕм.*

Виççĕмĕш сăпат аффиксĕсенче **т** сасă **ч** сасса куçать: *çыр-чĕ, çыр-чĕç; ил-чĕ, ил-чĕç.*

***137-мĕш задача.*** Иш, ярăн, кур, вĕрен глаголсене курса иртнĕ вăхăтра сăпатласа тухăр. Сăпатланине тĕслĕх çине пăхса тĕрĕслĕр.

***138-мĕш задача.*** Çак сăвăри паллă тунă глаголсем мĕнле вăхăтрине, мĕнле сăпатрине, мĕнле хисеприне каласа парăр.

Пахчана ирех эп **тухрăм**
уççăн-уççăн сывлама.
Эп тумлам-тумламăн **пухрăм**
**шăрçаларăм** сывлăма.
Шурăмпуçĕпе **çĕклентĕм,**
хĕвел **тухрĕ** чарласа.
Шăпчăк сассине **итлерĕм,**
хам та **ятăм** юрласа.

***139-мĕш задача.*** Çак предложенисене вуласа тухăр. Паллă тунă глаголсене çырса илĕр. Вĕсем мĕнле вăхăтрине, миçемĕш сăпатрине, мĕнле хисепре тăнине каласа тухăр.

Тĕслĕх: *ларчĕ,*—глагол,— курса иртнĕ вăхăтра, виççĕмĕш сăпатра, пĕрреллĕ хисепре тăрать.

Хĕвел анса **ларчĕ**. Каç **пулчĕ**. Акă аякра купăс сасси **илтĕнчĕ**. Уйăх **тухрĕ**.

Пӳртри хăй çутисем **сӳнчĕç**. Вăйăри çамрăксем тĕрлĕ юрăсем **юрларĕç** те **саланчĕç**.

## Курмасăр иртнĕ форма сăпат тăрăх улшăнманни.

***140-мĕш задача***. Курмасăр иртнĕ вăхăт мĕнле аффикс йышăннине асăрхăр.

| | |
|---|---|
| Эпĕ çыр-нă, пĕл-нĕ. | Эпир çыр-нă, пĕл-нĕ. |
| Эсĕ çыр-нă, пĕл-нĕ. | Эсир çыр-нă, пĕл-нĕ. |
| Вăл çыр-нă, пĕл-нĕ. | Вĕсем çыр-нă, пĕл-нĕ. |

Иртнĕ вăхăтăн курмасăр иртнĕ форми глагол тĕпĕ çумне **нă, нĕ** аффикс хушăннипе пулать. Курмасăр иртнĕ формăри глагол сăпат тăрăх та, хисеп тăрăх та улшăнмасть.

***141-мĕш задача***. Çак сăвăри паллă тунă глаголсем хăш вăхăтра тăнине каласа парăр.

## Пирĕн Конституци.

Ăна **кĕтнĕ** çĕршыв, **кĕтнĕ** çутă тĕнче,
ĕмĕт **суннă** пирте шĕл-кăварăн.
Баррикадăсенче, чул купи хӳттинче
ăна **чĕннĕ** Париж коммунарĕ.
**Ĕмĕтленнĕ** ăна инçетри ĕмĕрсем,
ăна **кĕтнĕ, шыранă** этемлĕх.
Капитал никĕсне тĕпĕнчен кисретсе,
ун çулне уçса **панă** Маркс, Энгельс.
Тракторсем уй-хирте **кăпкалатнă** çĕре,—
уй-хирсем çăра пурлăхпа тулччăр!
Ӳссе **çитĕнчĕ** вăл çак хĕрӳллĕ ĕçре
пирĕн ĕмĕт—пирĕн Конституци.

***142-мĕш задача.*** Сылтăм юпари глаголсем курса иртнĕ формăра сăпатланнине сулахай юпари глаголсем сăпатланнипе танлаштарса пăхăр. Вĕсен уйрăмлăхĕсене асăрхăр.

Пĕрреллĕ хисеп.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| 1-мĕш с. | *çыр-тăм,* | *ӳкер-тĕм,* | *пы-тăм,* | *кĕ-тĕм.* |
| 2-мĕш с. | *çыр-тăн,* | *ӳкер-тĕн,* | *пы-тăн,* | *кĕ-тĕн.* |
| 3-мĕш с. | *çыр-чĕ,* | *ӳкер-чĕ,* | *пы-чĕ,* | *кĕ-чĕ.* |

Нумайлă хисеп.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| 1-мĕш с. | *çыр-тăмăр,* | *ӳкер-тĕмĕр,* | *пы-тăмăр,* | *кĕ-тĕмĕр.* |
| 2-мĕш с. | *çыр-тăр,* | *ӳкер-тĕр,* | *пы-тăр,* | *кĕ-тĕр.* |
| 3-мĕш с. | *çыр-чĕç,* | *ӳкер-чĕç,* | *пы-чĕç,* | *кĕ-чĕç.* |

Курмасăр иртнĕ форма.

Эпĕ *çыр-нă, ӳкер-нĕ.* Эпĕ *пы-нă, кĕ-нĕ.*
Эпир *çыр-нă, ӳкер-нĕ.* Эпир *пы-нă, кĕ-нĕ.*

Тĕпĕ **р** сасăпа пĕтекен хăш-пĕр глаголсем иртнĕ вăхăтра (икĕ формăра та) çав **р** сасса çухатаççĕ: *пыр—пытăм, пынă; тăр—тăтăм, тăнă; кĕр—кĕтĕм, кĕнĕ; пер—петĕм, пенĕ.*

***143-мĕш задача.*** Çак глаголсене курса иртнĕ формăра тата курмасăр иртнĕ формăра лартса улăштарăр. Хăш глаголсен тĕпĕнчи ***р*** тухса ӳкет?

Хур, пар, çур, вĕр.

***144-мĕш задача.*** Çӳлталăк вăхăтне кура, скобкăри глаголсенчен пĕрне суйласа илсе, çырса илĕр.

Çуркунне (çитрĕ, çитет, çитнĕ, çитĕ).
Кунсем (вăрăмланĕç, вăрăмланчĕç, вăрăмланаççĕ, вăрăмланнă).
Юр кайса (пĕтрĕ, пĕтет, пĕтĕ, пĕтнĕ).
Симĕс курăк (тухать, тухрĕ, тухĕ, тухнă).
Çураки (пуçланчĕ, пуçланĕ, пуçланнă, пуçланать, пĕтрĕ, пĕтнĕ, пĕтет, пĕтĕ).

## 24 §. Глаголсен тĕпĕ.

***145-мĕш задача.*** Глаголсен кашни ушкăнне пăхса тухăр. Кашни ушкăнри глаголсен пĕр пек пайĕсене асăрхăр.

**Вула**-тăп, **вула**-тăн, **вула**-ть, **вула**-тпăр, **вула**-тăр, **вула**-ççĕ, **вула**-нă, **вула**-рăм;

**ĕçле**-тĕп, **ĕçле**-тĕн, **ĕçле**-т, **ĕçле**-тпĕр, **ĕçле**-тĕр, **ĕçле**-ççĕ, **ĕçле**-нĕ, **ĕçле**-рĕм.

Глаголсен кашни ушкăнĕн пĕр пек улшăнман пайсем пур. Вăл пайсем глаголăн тĕп пĕлтерĕшне пĕлтереççĕ. Глаголăн тĕп пĕлтерĕшне пĕлтерекен улшăнман пайне глагол **тĕпĕ** теççĕ *(вула, ĕçле, кур, кил, чуп, çӳре, вĕрен)*.

Глаголăн улшăнакан пайне глагол **аффиксĕ** теççĕ.

***146-мĕш задача.*** Çак предложенисене çырса илĕр. Глаголсен тĕпне аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

Кашни çулах майăн 1-мĕш кунĕнче тĕнчери ĕçхалăхĕ урама тухать, митингсем, демонстрацисем туса ирттерет. Пирĕн çĕршывра пур çĕрте те хĕрлĕ ялавсем вĕлкĕшеççĕ, хавасла юрăсем янăраççĕ. Ĕçхалăхĕ савăнать, хавасла пурăнăç панăшăн коммунистсен партине, унăн аслă çулпуçне Сталина тавтăвать.

***147-мĕш задача.*** Çак сăвăри пĕр тĕпрен кăна тăракан глаголсене (аффикссăр глаголсене) çырса илĕр.

Çĕршыв, янăра çурхи май юррипе!
Вĕç, вĕç, май юрри Советсен çĕрĕпе!
Çĕн пурнăç хĕвел пек çиçсе улăхать,
çĕршыв манăн тулăххăн сарăлса выртать.
Ешĕр, ман хĕвеллĕ çĕршывăм, ялан!
Юрла, шăпчăк, уççăн çĕршыв садĕнче!
Кам халь чĕрипе, чунĕпе те пуян,—
шăпчăк пек юрла эс çамрăклăх çинчен.

## 25 §. Пулманнине пĕлтерекен глаголсем.

***148-мĕш задача.*** Сулахай енчи глаголсемпе сылтăм енчи глаголсен пĕлтерĕшĕн уйрăмлăхне асăрхăр.

| | |
|---|---|
| *Эпĕ çыру çыратăп.* | *Эпĕ çыру çырмастăп.* |
| *Ĕнер çумăр çурĕ.* | *Паян çумăр çумарĕ.* |
| *Хурсем шывра ишеççĕ.* | *Чăхсем шывра ишмеççĕ.* |
| *Кайăксем çӳле вĕçеççĕ.* | *Кăпшанкăсем çӳлех вĕçмеççĕ.* |
| *Часах сулла пулĕ.* | *Текех сивĕ пулмĕ.* |

Сулахай енчи глаголсем ĕç пулнине е пулассине пĕлтереççĕ, сылтăм енчи глаголсем ĕç пулманнине е пулас çуккине пĕлтереççĕ.

***149-мĕш задача.*** Çаканти глаголсене ĕç пулманнине пĕлтерекен туса улăштарăр.

Çанталăк ăшăтрĕ. Çумăр çăвать. Хĕвел пăхать. Шыв юхать. Çиçĕм çиçет. Аслати авăтать. Çил вĕрет. Юр çăвать. Тăм ўкет. Шыв шăнать.

## Пулманнине пĕлтерекен глаголсем сăпатланни.

### Пĕрелле хисеп.

| | Хальхи вăхăт. | Иртнĕ вăхăт. | Пулас вăхăт. |
|---|---|---|---|
| 1-мĕш с. | *Эпĕ кай-мас-тăп,* | *кай-ма-р-ăм,* | *кай-м-ăп.* |
| | *Эпĕ кил-мес-т-ĕп,* | *кил-ме-р-ĕм,* | *кил-м-ĕп.* |
| 2-мĕш с. | *Эсĕ кай-мас-т-ăн,* | *кай-ма-р-ă-н,* | *кай-м-ăн.* |
| | *Эсĕ кил-мес-т-ĕн,* | *кил-ме-р-ĕн,* | *кил-м-ĕн.* |
| 3-мĕш с. | *Вăл кай-мас-ть,* | *кай-ма-р-ĕ,* | *кай-м-ĕ.* |
| | *Вăл кил-мес-т,* | *кил-ме-р-ĕ,* | *кил-м-ĕ.* |

### Нумайлă хисеп.

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1-мĕш с. | *Эпир кай-мас-т-пăр,* | *кай-ма-р-ăмăр,* | *кай-м-ăпăр.* |
| | *Эпир кил-мес-т-пĕр,* | *кил-ме-р-ĕмĕр,* | *кил-м-ĕпĕр.* |
| 2-мĕш с. | *Эсир кай-мас-т-ăр,* | *кай-ма-р-ăр,* | *кай-м-ăр* |
| | *Эсир кил-мес-т-ĕр,* | *кил-ме-р-ĕр,* | *кил-м-ĕр.* |
| 3-мĕш с. | *Вĕсем кай-маç-çĕ,* | *кай-ма-рĕç,* | *кай-м-ĕç.* |
| | *Вĕсем кил-меç-çĕ,* | *кил-ме-рĕç,* | *кил-м-ĕç.* |

Ĕç пулманнине пĕлтерме хальхи вăхăтра глагол тĕпĕ çумне **мас, мес** аффикс хушăнать, иртнĕ вăхăтра **ма, ме** аффикс хушăнать, ĕç пулас çуккине пĕлтерме пулас вăхăтра **м** аффикс хушăнать.

***150-мĕш задача.*** Çак статьяна çырса илĕр. Пулманнине пĕлтерекен глаголсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр. Вăл глаголсен вăхăтне, сăпатне, хисепне каласа парăр.

Ют çĕршывсенчи революциллĕ рабочисем пирĕн тăван çĕршыври пурăнăç епле юсанса пынине асăрхаса тăраççĕ. Пирĕн Совет Союзне тĕнчери мĕнпур рабочи хăйĕн тăван çĕршывĕ тесе хисеплет.

Капитализмлă государство рабочишĕн тăван çĕршыв пулма пултараймасть. Капитализмлă государствăра рабочи телейлĕ пурăнăç курраймасть. Унта нумай рабочисем хăйсене тăранмалăх ĕç те тупаймаççĕ.

Совет Союзĕ тĕнчери мĕнпур пролетарисен тăван çĕршывĕ пулса тăрать. Хамăрăн чаплă тăван çĕршывăмăра тăшмансем килсе тапăнасран сыхлама эпир яланах хатĕр тăратпăр. „Пире ют çĕр пĕр пусăм та кирлĕ мар. Анчах хамăр çĕре те, хамăр çĕре пĕр вершук та никама та памастпăр“ (*Сталин*).

***151-мĕш задача.*** Çак предложенисене çырса илĕр. Çырса пĕтермен глаголсене çырса пĕтерсе пырăр. Пулнине пĕлтерекен глаголсене пĕр йĕрпе, пулманнине пĕлтерекен глаголсене икĕ йĕрпе аялтан туртăр.

Пире фашистсем, капиталистсем курай.... Вĕсем пирĕн çĕршывра власть рабочисемпе хресченсен аллинче тăнине юрат.... Вĕсем пирĕн çине вăрçăпа килме хатĕрлен.... Анчах пирĕн совет ĕçхалăхĕ, пирĕн Хĕрлĕ Çар сыхă тăр.... Пирĕн Хĕрлĕ Çар кирек епле капитализмлă çĕршывăн çарне те çапса аркатма пултар.... Куна 1938-мĕш çулта Хасан кӳлли çывăхĕнче пулнă çапăçусем лайăх кăтарт.... Япони самурайĕсем пирĕн çĕршывăн пĕр пусăмне те туртса илей.... Вĕсенчен нумайĕшĕ Хасан кӳлли çывăхĕнчен чĕррĕн каяй....

***152-мĕш задача.*** Çак глаголсене хире-хирĕçле пĕлтерĕшлĕ глаголсем тупăр.

| | |
|---|---|
| Вулать — вуламасть | Пăхмасть — пăхать |
| Вылять — ... | Утмасть — ... |
| Шавлать — ... | Шутламасть — ... |
| Ывăнать — ... | Пытанмасть — ... |
| Канать — ... | Йăлтăртатмасть — ... |
| Пырать — ... | Вĕрмест — ... |

| | |
|---|---|
| Килет — ... | Ешĕрмест — ... |
| Кĕрлет — ... | Нӳрленмест — ... |
| Вĕçет — ... | Пиçмест — ... |

Ĕç пулманнине пĕлтерекен глаголсен вĕçĕнче, виç-çĕмĕш сăпатра, хальхи вăхăтра, пĕрреллĕ хисепре хытă сăмахра **масть,** çемçе сăмахра **мест** çырмалла; ну-майлă хисепре хытă сăмахра **маççĕ,** çемçе сăмахра **меççĕ** çырмалла.

***153-мĕш задача.*** Çак глаголсене кӳртсе çуркунне çинчен тĕрлĕ предложенисем тăвăр.

Хĕртет. Пĕçертет. Вĕрмест. Курăнмасть. Кăтиклет. Юрлать. Хĕпĕртеççĕ. Выляççĕ.

Предложенисем тума пулăшакан япала ячĕсем: *юр, хĕвел, çил, чăхă, тăри, ачасем.*

***154-мĕш задача.*** а) Сăвва çырса илĕр. Глаголсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр. б) Сăвва наизусть калама вĕренĕр.

## Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!
Пирĕн вăй вăл, пирĕн ирĕк, пирĕн власть.
Пур вăйранах, коммунарсем, кĕрешĕр —
тăшмана хĕрхенмешкĕн юрамасть.
Ĕççыннисем, хĕçпăшалсем алла илĕр,
тăпăлтарăр палачсене тĕпренех.
Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!
Кар тăрсассăн, хĕвел пăхĕ хĕрӳрех.

Хĕçпăшала харампырсем çине тĕллĕр,
Ленин панă ялав пирĕн алăра.
Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!
Пĕр коммуншăн çапăçмашкăн малалла!

## 26 §. Вĕреннине аса илсе çирĕплетмелли задачăсем.

***155-мĕш задача.*** Çак ансăр предложенисенчен анлă предложенисем туса, пĕчĕк калав çырăр.

## Утă çинче.

Çулла. Çанталăк уяр. Хĕвел пĕçертет. Курăк çитĕннĕ. Колхозниксем çулаççĕ. Çавасем шăхăраççĕ. Утă типет. Ачасем выляççĕ.

***156-мĕш задача.*** Çак анлă предложенисенчен подлежащисемпе сказуемăйсене уйăрса илсе ансăр предложенисем тăвăр. Ансăр предложенисене çырса илĕр. Подлежащисене аялтан пĕр йĕр, сказуемăйсене икĕ йĕр туртса паллă тăвăр.

Аякра, çурçĕр енче, Сольвычегодск ятлă хула ларать. Ĕлĕк патша влаçĕ кунта революционерсене ссылкăна янă. Патша тарçисем Сталин юлташа та революци ĕçне ĕçленĕшĕн çак хуланах янă. Кунта Сталин икĕ çула яхăн пурăннă. Вăл хула хĕрринчи пĕчĕк пӳртре хваттерте пурăннă. Полицисем час-часах унта пырса вулама чарнă кĕнекесем, революциллĕ çырусем шыранă. Каçсерен Сталин юлташ пĕрмаях кĕнеке вуланă, çырнă. Вăл çак аякри вырăнтан тарма май шыранă. Пĕр каçхине çĕр тĕттĕмĕпе усă курса, вăл кунтан тарнă.

Сталин ссылкăра пурăннă çурта халĕ Совет влаçĕ музей тунă.

***157-мĕш задача.*** Çак статьяна вуласа тухăр. Кашни предложенире сказуемăйне тупăр.

## Ту çине хăпарни.

Эпир ту çине икĕ кун хăпаратпăр ĕнтĕ. Хăпарнăçемĕн ту аякки чăнкăланса пырать. Хăпарасси тата çур километр юлчĕ. Анчах пирĕн çула стена пек чул пӳлчĕ. Хамăра хамăр пĕр-пĕринчен вĕренсемпе çыхрăмăр. Майĕпе çӳлелле кармашатпăр. Акă пăр çине кĕтĕмĕр. Пăр çинче утма майĕ те çук. Пуртăпа картлашкасем тăватпăр. Сывлама йывăрланчĕ. Сывлăш çитмест. Пуç ыратать. Ăш пăтранать.

Акă эпир юлашки вăя хурса, ту тăррине çитрĕмĕр. Пирĕн умра пĕтĕм тĕнче усăлса кайрĕ. Таçти инçете çиттиччен тусем тăсăлаççĕ. Юрпа витĕннĕ ту тăррисем темĕн çӳлĕш тăраççĕ. Вĕсем çинчен тем пысăккĕш пăрсем анаççĕ.

***158-мĕш задача.*** Çак статьяри япала ячĕсене уйăрса илĕр. Кашни япала ячĕ мĕнле падежрине каласа парăр.

## Уй-хир варрипе.

Эпир чугун çулпа пыратпăр. Иртен пуçласах вагон чўречинчен çеçен хирсем курăнаççĕ. Йĕри-тавра пĕр йывăç та çук. Вĕçĕ-хĕррисĕр ылттăн тулă тинĕс пек хумханса ларать. Хĕвелçавăрнăшсем хĕвелпе вут пек çутăлса тăраççĕ.

Колхозниксем тырă пуçтара пуçланă. Çулакан машинăсем, кĕлте çыхакан машинăсем ĕречĕ-ĕречĕпе çўреççĕ, хăйсем хыççăн вырнă тырра пăрахса пыраççĕ. Вырăнĕ-вырăнĕпе пысăк капансем лараççĕ. Çапакан машинăсем ĕçлеççĕ. Аякра ялсем курăнаççĕ, çўлĕ элеваторсем тăраççĕ. Колхозниксем лавсемпе, грузовиксемпе çĕнĕ тырă турттараççĕ.

***159-мĕш задача.*** Çак сăвва çырса илĕр. Сăвăри япала ячĕсем предложенире мĕнле член пулнине паллă тăвăр.

Çĕкленчĕ асамат кĕперĕ
ярăмланса тўпе çине.
Ăш çумăр çитрĕ те йĕпетрĕ
паян каллех уй-хирсене.
Тасалчĕ сывлăш çумăр хыççăн,
чечек шăрши тавралăхра.
Хаваслăн та илемлĕн, уççăн
юрă янрарĕ улăхра.
Юрлать шăпчăк, куккук та уççăн
чарна пĕлмесĕр авăтать.
Хĕвел пăхать. Каллех хавассăн
ĕçе бригада тытăнать.

***160-мĕш задача.*** Çак статьяна вуласа тухăр. Паллă тунă ***кĕтў*** сăмах кашни предложенире мĕнле падежра тăнине каласа парăр.

## Колхоз кĕтĕвĕ.

Аслă хирте пысăк **кĕтў** çўрет. **Кĕтўре** икçĕр аллă ĕне. Самăр ĕнесем сĕткенлĕ çўлĕ курăка çисе çўреççĕ. Курăк

лайăх пирки пĕр ĕни те **кĕтӳрен** тарма шутламасть. Кáнтăр çитрĕ. **Кĕтĕвĕн** канмалла. Кĕтӳçĕ **кĕтĕве** шыв **хĕрне** тапăра антарать.

***161-мĕш задача.*** Сăвва çырса илĕр. Паллă тунă ***пулă*** сăмах кашни предложенире мĕнле падежра тăнине каласа парăр.

## П у л ă.

Хĕвел пăхать тӳпере,
**пулă** вылять кӳлĕре.
Пулăç ларать вăлтапа,
**пулла** тытать ăманпа.

**Пуллăн** тутлă какай те,
**пуллăн** тутлă вăлчи те.
Пулăç туртать вăлтине
**пулла** ярать витрине.

**Пулă** тулчĕ витрене
старик утрĕ хăй килне.
Каçалапа **пулăран**
шӳрпе пиçрĕ пит аван.

***162-мĕш задача.*** Çак статьяна вуласа тухăр. Статьяран паллă ячĕсене çырса илĕр. Скобка ăшне вĕсем кашни мĕнле ыйтуна ыйтăннине çырăр.

Т ĕ с л ĕ х: *Çуллахи (хăçанхи?)*

## Çуллахи ĕçсем.

Çуллахи вăхăтра колхозра ĕç питĕ нумай. Хирти çумкурăксене çумламалла. Улăхри курăка çулса утă тумалла. Типĕ утта капана хывмалла. Кĕрхи тырăсене вырса пуçтарас пулать. Кĕрхи тырăсене вырса пĕтернĕ çĕре çуртыррисем те пулса çитеççĕ. Колхозсен аслă пахчисенче те çулла ĕç нумай. Çавăнпа хресченсем çуллахи вăхăта ĕççи теççĕ.

***163-мĕш задача.*** Çак сăвва вуласа тухăр. Паллă тунă местоименисем мĕнле сăпатрине, мĕнле падежра тăнине каласа парăр.

Тупа тăвап **эпĕ** — ленинец пулма,
Ленин пек хĕрӳллĕ кĕрешме, пурăнма.
Хаваслăн тапать **манăн** телейлĕ чĕрем —
эп Сталина куртăм тăван Кремльре.

**Ун** çирĕп маттур аллăне тăванла
тытса чăмăртарăм таса кăмăлтан.
Çав алăпа Сталин аттемĕр **пире**
кăтартрĕ мăн çул — хĕвеллĕ ире.
Ăсĕпе **вăл** çӳлĕ Памир тăвĕнчен.
**Ун** кăмăлĕ кашни этем чĕринчех.
Хĕвел пек хĕрӳ те ачаш кăмăлпа
савса ăшăтать **вăл** кашни халăха.

***164-мĕш задача.*** Çак статьяна çырса илĕр. Глаголсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр. Кашни глаголăн вăхăтне, сăпатне, хисепне каласа парăр.

Рабочисем фабрикăсенче, заводсенче, шахтăсенче ĕçлеççĕ. Вĕсем машинăсем тăваççĕ, çĕркăмрăкĕ, нефть кăлараççĕ, ĕççыннисене кирлĕ тĕрлĕ таварсем тăваççĕ.

Колхозниксем колхозсенче ĕçлеççĕ. Вĕсем тĕрлĕ тырă акаççĕ, тĕрлĕ пахча-çимĕçсем лартса ӳстереççĕ, выльăх ĕрчетеççĕ.

Рабочисем хулара пурăнаççĕ. Колхозниксем ялта пурăнаççĕ. Ялпа хула çирĕп çыхăну тытаççĕ. Хула яла машинăсем, тĕрлĕ таварсем тăратать. Ял хулана тĕрлĕ тырă, пахча-çимĕçсем, аш-какай, сĕт-çу тăратать.

***165-мĕш задача.*** Çак статьяра тĕл пулакан кашни глаголăн вăхăтне кăтартса парăр.

Ĕлĕк ĕççыннисем патша чиновникĕсен, буржуазин, кулаксен пусмăрне тӳссе пурăннă. Ĕççынни темĕн чухлĕ ĕçлесен те çителĕклĕ пурăнăçпа пурăнайман.

Халь ĕççыннисен пурăнăçĕ пĕтĕмпех урăхланчĕ. Совет влаçĕ ĕççыннисене ирĕке кăларчĕ. Колхозниксем колхозсене пĕрлешрĕç. Хресченсем колхозра хăйсен телейне тупрĕç. Вĕсем халь пуян пурăнăçпа пурăнаççĕ. Фабрикăсем, заводсем государство аллинче тăраççĕ. Рабочисем кунне 7—8 сехет ĕçлеççĕ.

Пурăнăç çулсерен лайăхланса пырать. Малашне вăл тата телейлĕрех, тата çутăрах пулĕ.

# ТУПМАЛЛИ.


| | стр. |
|---|---|
| 1 §. Ансăр предложенипе анлă предложени | 3 |
| 2 §. Предложенири сăмахсем улшăнни | 12 |
| 3 §. Хутлă сăмахсем | 17 |
| 4 §. Япала ячĕсем | 20 |
| 5 §. Япала ячĕсем предложенире подлежащее е кĕçĕн член пулни | 21 |
| 6 §. Япала ячĕсен падежĕсем | 22 |
| 7 §. Япала ячĕсем пĕрреллĕ тата нумайлă хисепре пулни | 24 |
| 8 §. Хупă сасăпа пĕтекен япала ячĕсем вĕçленни | 25 |
| 9 §. А, е усă сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсем вĕçленни | 27 |
| 10 §. У, ӳ усă сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсем вĕçленни | 28 |
| 11 §. Ă, ĕ усă сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсем вĕçленни | 29 |
| 12 §. И усă сасăпа пĕтекен япала ячĕсем вĕçленни | 31 |
| 13 §. Й сасăпа пĕтекен япала ячĕсем вĕçленни | 32 |
| 14 §. Та, те, тан, тен аффикссене çырасси | 34 |
| 15 §. Хăш-пĕр хупă сасăсем пĕрпекленни | 36 |
| 16 §. Паллă ячĕсем | 38 |
| 17 §. Сăпатлă местоименисем | 43 |
| 18 §. Глаголсем | 46 |
| 19 §. Глаголсем сăпатланни | 47 |
| 20 §. Глаголăн вăхăчĕсем | 48 |
| 21 §. Глаголсем хальхи вăхăтра сăпатланни | 51 |
| 22 §. Глаголсем пулас вăхăтра сăпатланни | 54 |
| 23 §. Иртнĕ вăхăт | 55 |
| 24 §. Глаголсен тĕпĕ | 59 |
| 25 §. Пулманнине пĕлтерекен глаголсем | 61 |
| 26 §. Вĕреннине аса илсе çирĕплетмелли задачăсем | 63 |



Редактор Н. А. Андреев. Техред. Ф. Яковлев.

Послано в производство 27/VI — 1939 г. Подписано к печати 4/IX-39
Уполн. Чувашглавлита № 2769 Заказ № 422. Об'ем 4,25 п. л.
Тираж 40000 экз. Ст. ф. б. 60/92 1/16

Отпечатано в типографии № 1 НКМП ЧАССР, г. Чебоксары, Володарского,

Цена 65 коп.

А. С. ОТАЧКИН

# ГРАММАТИКА ЧУВАШСКОГО ЯЗЫКА

ЧАСТЬ III

ГОСИЗДАТ ЧАССР
ЧЕБОКСАРЫ — 1939